КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн
тата Министрсен Совечĕн органĕ

Орган Чувашского обкома КПСС, Верховного Совета
и Совета Министров Чувашской АССР

№ 11 (20144) • Шăматкун, 1990 çулхи январĕн 13-мĕшĕ • Хаçат 1918 çулхи февральтенпе тухать • Хакĕ 3 пус

РЕСПУБЛИКА ĔÇ-ХĔЛĔ— ÇĔРШЫВ ĔÇ-ХĔЛĔ

М. С. ГОРБАЧЕВ Литва ССРĕнче пулни

ВИЛЬНЮС, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кунта КПСС Центральнăй Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ, СССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ М. С. Горбачев килсе çитнĕ. Вильнюсри аэропортра ăна КПСС Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕн членĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн секретарĕ В. А. Медведев, КПСС Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕн членĕ, СССР Министрсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ, СССР Госпланĕн председателĕ Ю. Д. Маслюков, КПЛ Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. Бразаускас, КПЛ Центральнăй Комитечĕн секретарĕ (КПСС платформипе килĕшӳллĕн) М. Бурокявичюс, республика Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ В. Астраускас, Литва ССР Министрсен Совечĕн Председателĕ В. Сакалаускас кĕтсе илнĕ.

М. С. Горбачевпа пĕрле КПСС Центральнăй Комитечĕн секретарĕ, «Правда» хаçатăн тĕп редакторĕ И. Т. Фролов килсе çитнĕ.

* * *

Советлă Литвари ĕççыннисем М. С. Горбачев килессе кĕтнĕ. Çакăн умĕн январьти темиçе кун хушшинче рабочисемпе ял ĕçченĕсем, студентсемпе творчество интеллигенцийĕн представителĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн декабрьте пулса иртнĕ Пленумне хутшăннă çынсемпе тĕл пулнă. КПСС Центральнăй Комитечĕн çак пленумĕ Литва Компартийĕн XX съезчĕ хыççăн Литва Компартийĕнче пулса тăнă лару-тăрăва тата республикăри пĕтĕмĕшле лару-тăрăва сӳтсе явнă. Вильнюсра, Литвая тĕрлĕ районĕсенче пĕр-пĕринчен нимĕн пытармасăр калаçнă, çак калаçусен тĕллевĕ — коммунистсен ваййĕсене пĕрлештересси, обществăри тĕрлĕ юхăмсен позицийĕсене тимлĕрех тишкерес-си. Республикăра нумайăшĕ çапла шутлать: вĕçсĕр пайан хĕрӳленсе кайни тата пĕр-пĕрне ӳпкелеме тăрăшни кирлĕ мар. Вĕсен пайнхи чăнлăхсене пур енлĕн виçсе хак-

рĕнпе тĕл пуласса кĕтрĕм. Эпир пĕрле пуçаннă хамăрăн перлехи ĕçе, пĕтĕм тĕнчене вырăнтан хускатнă ĕçе малалла мĕнлерех тăвасси пирки пĕрле шухăшлапăр. Эпир халĕ хамăрăн пĕтĕм пурнăçа çĕнетсе лайăхлатма пуçланă ĕнтĕ, çавăнпа хамăрăн тĕллеве тата уçăмлăрах палăртас пулать пирĕн.

Виргилиус Зигмантовичюс, ялти Культура çуртĕн директорĕ: Михаил Сергеевич, эпир пурте çĕнĕ шухăшлав çинчен калаçатпăр-калаçатпăр, çапах та мĕн-ха вăл? Çак сăмахсене чăнлăхпа çыхăнтармалла вĕт-ха.

М. С. Горбачев: Эсир, çамрăк çын, ку ыйтупа интересленнине ырлатăп эпĕ. Мĕншĕн тесен, тĕрĕссипе, çакă совет халăхĕн, çĕршыври мĕнпур халăхсен шăпине пырса тивет. Енчен те сирĕн çав ыйтусем çине тĕрĕс ответсем тупас килет пулсан, çакна эпĕ тата ытларах ырлатăп. Атьăр-ха, ответсене пĕрле шырар тата пулса тăнă лару-тăрăва тĕрĕс хаклар. Çакă вăл пирĕн пĕрлехи киле пана ĕç те пулса тăрать тесе шутлăпăр, мĕншĕн тесен площадьре эпир мĕнпур ыйтусем çине тӳрех ответлеймĕпĕр.

Çапла вара, пĕрремĕшĕ. Камсем-ха эпир? Кирек-хăш республикăра та, кирек-хăш поселокра та мĕнпур национальноçсен представителĕсем пурăнаççĕ. Çитменнине тата Литвара, литовецсен йышĕ пуринчен те пысăкрах республикăра, 20 проценчĕ — пурнерех çавăн пек правасемпех усă куракан çынсем. Пирĕн çĕршывра вара халĕ 60 миллион ытла çын хăйсен наци территорийĕсен тулашĕнче пурăнать. Халĕ акă сирĕн ыйтăвăра тепĕр хут лартар: эпир пĕр-перинчен уйăрăлапăр, пĕчченшерĕн пурăнма тытăнапăр, çав çынсем вара мĕнлерех пурăнма тивĕçлĕ, шăписем мĕнлерех пулĕç вĕсен? Польшăра та çак ыйтăвах параççĕ, ФРГра та Атăл тăрăхĕнчи нимĕçсен шăпи çинчен ыйтаççĕ. Эпир пурте, пирĕн çапла тăвас килет-и, çук-и, пĕр-пĕринпе çыхăннă. Çитменнине тата эпир сирĕнпе халлĕхе тĕрĕссипе

тухрăмăр. Еçе эпир çавăн пек пайларăмăр: сăмахран, Узбекистан хăйĕн пĕтĕм çĕрĕпе пире пурне те çĕрмамăк парса тăрас тĕллевпе усă курать, çав вăхăтрах вăл шăварса тăракан çĕрсем çинче сĕт те, ытти ялхуçалăх продукцийĕ те туса илме пултарнă пулĕччĕ. Акă вăл, специализаци. Халĕ вара сирĕн «Сигмăна» илер. Пирĕн сирĕнпе, юлташсем, Литвара çĕршывăн хăйне евĕрлĕ темиçе завод пур. Ку вăл лайăх е начар, халĕ калаçар мар. Енчен те паян вĕсенчен пĕри чарăнас пулсан — пĕтĕм çĕршыв йывăрлăха керсе ӳкет.

— Манăн сире пурне те çапла шантарса калас килет,— терĕ малалла М. С. Горбачев, — эпир тытнă çул-йĕр пумай ыйтăва — социализм шăпине, пĕтĕм общество тата, паллах, федераци шăпине, урăхла каласан, Союзра пурăнакан мĕнпур халăхсен пуласлăхне татса пама пулăшать. Эпир шутланă тăрăх, шăпах çĕнетӳ çакăн пек лару-тăру туса хучĕ, çавна май çак мĕнпур ыйтусене лăпкăн сӳтсе явма пулать тата сан сурăм хыçĕнче такам тăманнине тата сана айăпласа тăвăрма хатĕр пулманнине сирĕп шанса тăма пулать. Çакă вăл çĕнетĕвĕн чи пирвайхи тата чи кирлĕ çĕнтерĕвĕ: паян эпир мĕнпур ыйтусене лăпкăн, ответлăха туйса, пур енлĕн сӳтсе явма пултаратпăр. Чăнах та, демагогсемпе хĕтĕртекенсемсĕр те пулмасть. Анчах, ман шутпа, чи кирли çĕнтеретех: хамăр пурнăçăн мĕнпур енĕсене эпир уççăн сӳтсе явма пултаратпăр.

Тепĕр енчен, федераци хăй улшăнсан, çынсем хăйсене лайăхрах туйма пуçласан çеç пурăнма пултарать çĕнетӳ. Эсир астăватăр-и, эпир социаллă пурнăçпа экономикăна хăвăртрах аталантарас-синчен пуçларăмăр тата вăл пурнăçа кĕме пултарайманнине куртăмăр. Чи малтанах, политика системин ыйтăвĕсене татса пама кирли палăрчĕ. Çавăнпа та эпир вĕсем çине куçрăмăр. Тата çакă питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ:

тивĕçлĕ те. Кунта политикăри анлă хайтелленлĕх çине, халиччен пулман хайтĕлленлĕх — политикăри тата экономикăри хайтĕлленлĕх çине куçмалла. Унăн чикки пĕр япала çеç пулма пултарать; вăл йĕркесĕрлĕхе ан куçтăр, пăтрашу ан хускаттăр, пĕр-перинчен уйăрса ан ятăр, мĕншĕн тесен çакă мĕнпур чĕрĕ çыхăнăва — çынсем хушшинчи, экономикăри, социаллă пурнăçри, наукăри çыхăнусене пĕтерсе хурать. Литва мĕнлерех пулнине хăшпĕрисем маннă. Аса илтерме хаюлăх çитеретĕп эпĕ. Хуттăр çыннисем, ан кӳренĕр. Ку вăл сирĕн халăх ятне ямасть, пĕтĕм çĕршыв ун чухне хресченсенчен тăнă. Халĕ, акă, ку чухнехи Литва çине пăхăр-ха. Вăл тĕпрен улшăнчĕ. Анчах та çакă паллă: республикăна çĕнĕлле аталантарма вăхăт çитрĕ, çавăн пекех ытти кирек хăш халăха та, пĕтĕм çĕршыва çĕнĕлле аталантармалла. Çак тĕллевпе ĕçлер те малашне.

Тата тепĕр факт аса илтеретĕп: революцийченхи Литвара 57 проценчĕ ют çĕршывсен капиталĕ пулнă. Пире вара: хăйтĕлленлĕх, хăйтĕлленлĕх, теççĕ. Пĕлетĕр-и, ку вăл демагоги евĕрлĕрех пулса тухать. Кӳренмелле ан пултăр — каллех фактсене аса илетĕп. Колониализм системине çапса аркатнăранпа, нумай государство политика тĕлĕшĕнчен хăй тĕллĕн аталанма пуçланăранпа, 40 çул иртрĕ. Анчах тĕрĕссипе вĕсем хăйсем теллĕн аталанман тата аталанма та пултараймаççĕ. Вĕсем чĕртавар парса тăракан çĕршывсем пулнă, халĕ те çапла. Ресурссене йӳнĕпе туяççĕ тата ĕç вăйĕпе те йӳнĕллех усă кураççĕ. Метрополисенче вара пурнăç шайĕ ӳснĕçемĕн ӳсет. Çапла вара, енчен те хăшĕ те пулин паян пирĕн çĕршыври çыхăнусене татас, пĕр-пĕр республикăна, пĕчĕк халăха айккине парса хăварас тет пулсан — эпĕ, юлташсем, çак политикăна хутшăнмастăп. Эпĕ хам мĕнĕенннине тӳрре каларма тă-

кайнă. Ку предприяти продукцине çĕршыври трактор тăвакан тата пухакан нумай конвейерсем çинче пĕлеççĕ тата кĕтеççĕ. Нумай нацилле коллектив вăй хурать кунта: 30 проценчĕ — поляксем, 29-шĕ — литовецсем, 20-шĕ — вырăссем. Белоруссем тата ытти национальноçсен представителĕсем нумай. Вĕсене пурне те хăйсен предприятийĕн ĕçĕсем, Литвара пулса тăнă çамал мар лару-тăру пăшăрхантарать.

Çак предприятире пулса курни Генеральнăй секретарь çулçӳревĕнче кирек хăçан та çынсемпе иртгерекен тĕлпулусем тата калаçусем тĕп вырăнта пулнине тепĕр хут çирĕплетсе парать. Рабочисемпе, инженерсемпе вăл пĕтĕм чун-чĕререн, пур енлĕн интересленсе калаçнă, вĕсен шухăшне, ыйтăвĕсене тимлĕ итленĕ, хăйĕн позицине ăнлантарса панă, ĕненгерме тăрăшнă, вĕсемпе килĕшмен, тавлашнă, ăнлантарнă. Çавăнпа та çынсемпе хутшăнни май вăхăт çинчен те манса кайнă. Çулçӳревĕн программи те улшăннă. Анчах çакă вăл икĕ енĕшĕн те усăллă çеç пулнă.

Завод проходнойĕнчен иртсенех Михаил Сергеевича пухăннисем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ, саламланă, хăйсем патне килнĕшĕн тав тунă. М. С. Горбачев топливо насусĕсем пухакан цехсем тăрăх тата механика цехĕ тăрăх иртнĕ. Ĕç, йăла условийĕсем, професси тĕлĕшĕнчен ӳсмелли майсем, çынсем хушшинчи хутшăнусем, нацисем хушшинчи хутшăнусем — çакăн çинчен калаçнă вăл Т. Тумас, Л. Адамович, И. Миллем, С. Смола, В. Гражданов рабочисемпе тата ыттисемпе те. Унпа калаçакансем хушшинче литва, поляк, белорус, вырăс наци представителĕсем пулнă. Çак коллективра çеç мар вăй хураççĕ вĕсем. Литва — нумай нацилле республика. Нацисем хушшинче хирĕçӳ каларма, шовинистла камал-туйăм çуратма юрамасси çинчен каланă. Литвана çĕнетӳ çулĕпе малалла

Илья Ильин механизатор вăтăр çула яхăн Вăрмар районĕнчи «Мусирминский» совхозра ĕçлет.

Трактор паркĕнче çамрăксем те йышлă. И. Ильин, наставник пулнă май, вĕсене ĕçре куллен пулăшать, вĕрентсе пырать.

Çак кунсенче вăл ĕçри юлташĕсемпе хиртен фермăсем патне выльăх апачĕ турттарать.

● И. Ильин тракторист.

С. Игнатьев фотоӳкерчĕкĕ.

Суйлав умĕн

Кандидатсене регистрациленĕ

Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиссийĕсем çак кандидатсене регистрациленĕ:

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ЛЕНИН РАЙОНĔ ТАРАХ

10-мĕш Шумилов суйлав округĕ

Валентин Борисович **Исаев,** 1953 çулта çуралнă, «Шупашкарти электроаппаратура завочĕ» производство пĕрлешĕвĕн слесарь-инструментальщикĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Сергей Валерьевич **Маслов,** 1964 çулта çуралнă, Шупашкарти почтамтăн электромеханикĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать.

17-мĕш Заречнăй суйлав округĕ

Вера Васильевна **Балепскал,** 1942 çулта çуралнă, «Чувашспецстрой» трестăн куçса çӳрекен механизацилле «Чебоксарская» колоннин бригадирĕ, партире тăмасть,

Андреев, 1962 çулта çуралнă, халăх депутачĕсен Калинин район Совечĕн ĕçтăвкомĕн шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен инспекторĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Вениамин Никифорович **Никифоров,** 1945 çулта çуралнă, ДОСААФ Чăваш облаçть комитечĕн председателĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Марат Ильдарович **Ягофаров,** 1961 çулта çуралнă, «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнчи çамрăксен сурт-йĕр комлекçĕн организацилле комитечĕн председателĕ, ВЛКСМ членĕ, Шупашкарта пурăнать.

34-мĕш Пятино суйлав округĕ

торийĕн начальникĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать.

38-мĕш Кăнтăр суйлав округĕ

Авенир Андреевич **Петровский,** 1955 çулта çуралнă, Шупашкарти ятарлă 21-мĕш шкул учителĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать;

Борис Николаевич **Якушкин,** 1938 çулта çуралнă, Шупашкарти «Стройкерамика» завод директорĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать.

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ МУСКАВ РАЙОНĔ ТАРАХ

41-мĕш Университет суйлав округĕ

Владимир Васильевич **Петров,** 1959 çулта çуралнă, Шупашкарти «Контур» заводри токарь, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать.

Фролов килсе çитнĕ.

* * *

Советлă Литвари ĕççыннисем М. С. Горбачев килессе кĕтнĕ. Çакăн умĕн январьти темиçе кун хушшинче рабочисемпе ял ĕçченĕсем, студентсемпе творчество интеллигенцийĕн представителĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн декабрьте пулса иртнĕ Пленумне хутшăннă çынсем. КПСС Центральнăй Комитечĕн çак пленумĕ Литва Компартийĕн XX съезчĕ хыççăн Литва Компартийĕнче пулса тăнă лару-тăрăва тата республикăри пĕтĕмĕшле лару-тăрăва сÿтсе явнă. Вильнюсра, Литвăн тĕрлĕ районĕсенче пĕр-пĕринчен нимĕн пытармасăр калаçнă, çак калаçусен тĕллевĕ — коммунистсен вăйĕсене пĕрлештересси, обществăри тĕрлĕ юхăмсен позицийĕсене тимлĕрех тишкересси. Республикăра нумайăшĕ çапла шутлать: вĕсене паян хĕрÿленсе кайни тата пĕр-пĕрне ÿпкелеме тăрăшни кирлĕ мар, вĕсен паянхи чăнлăхсене пур енлĕн виçсе хакламалла, суверенитетлă союзлă республикăсен федерацине çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ утăмсем тумалла.

Литвăн ирхи хаçачĕсем пурте паян хăйсен материалĕсенче М. С. Горбачев килсе çитни çинчен çырнă. «Тиеса» çак визита историе кĕрсе юлакан событи тесе хаклать. Пирĕн пата тĕнчери пурте пĕлекен тата çĕнĕлле шухăшлав идейине, паянхи кун пире уйрăмах кирлĕ идейăна кăларса тăратнă çын килсе çитет, çырать вăл «Хамăрăн тивĕçе упрар» çырура. Вăл пирĕн пата ответлă вăхăтра — халăх политикăпа ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен çĕнелсе сиккине тапхăрта килсе çитет.

Аэропортран М. С. Горбачев тÿрех Литва столицин В. И. Ленин ячĕпе хисепленекен площадьне кайнă. Вильнюсра пурăнакан пиншер çынпа тĕл пулнă вăл. Хулари çанталăк — çуркуннехи пек. Хĕррипе вăтă çăкасем лартса тухнă илемлĕ сквер юртан тасалнă. Çăкасем литовецсемшĕн вырăссен хурăнĕ пекех, çавăнпа та «Вильнюсра каллех чечекре çăкасем» юрра кунта, вырăс хурăнĕ çинчен хывнă юрра юрланă пек, пурте юрлаççĕ.

М. С. Горбачев, пухăннисем саламласа кăшкăрнă май, машинăран тухать. Вăл В. И. Ленин памятникĕ умне чĕрĕ чечексем хурать, ун хыççăн площадре пухăннă çынсем патнелле утать.

Сасă: Ырă кун пултăр, пирĕн çĕр çине килсе çитнĕ ятпа!

Сасă: Михаил Сергеевич, Сире кунта кĕтрĕç!

М. С. Горбачев: Эпĕ те си-

се шутлăпăр, мĕншĕн тесен площадьре эпир мĕнпур ыйтусем çине тÿрех ответлеймепĕр.

Çапла вара, пĕрремĕшĕ. Камсем-ха эпир? Кирек-хăш республикăра та, кирек-хăш поселокра та мĕнпур национальноçсен представителĕсем пурăнаççĕ. Çитменнине тата Литвăра, литовецсен йышĕ пуринчен те пысăкрах республикăра, 20 процентне — пурперех çавăн пек правасемпех усă куракан çынсем. Пирĕн çĕршывра вара халĕ 60 миллион ытла çын хăйсен наци территорийĕсен тулашĕнче пурăнать. Халĕ акă сирĕн ыйтăвăра тепĕр хут лартар: эпир пĕр-пĕринчен уйрăлăпăр, пĕчченшерĕн пурăнма тытăнăпăр, çав çынсем вара мĕнлерех пурăнма тивĕçлĕ, шăписем мĕнлерех пулĕç вĕсен? Польшăра та çак ыйтăвах параççĕ. ФРГра та Атăл тăрăхĕнчи нимĕçсен шăпи çинчен ыйтаççĕ. Эпир пурте, пирĕн çапла тăвас килет-и, çук-и, пĕр-пĕринпе çыхăннă. Çитменнине тата эпир сирĕнпе халлĕхе тĕрĕссипе федерацинпе пурăнман та. Эпир унитарлă государствăра пурăннă. Унта вара хăйĕн чăнлăхĕсем пулса тăнă.

Сасă: Анчах çакна пула экономика инкек тÿсет вĕт...

М. С. Горбачев: Эпир ку тема патне таврăнăпăр-ха. Пирĕн çапла тăвас килет: çын хăйне лайăх туйтăр тата пуринпе те çавăн пекех пултăр. Аса илĕр-ха, Украинăра вырăс чĕлхи çинчен ыйту лартрĕç çеç, çака тÿрех нумай çын интересĕсене пырса тиврĕ. Украинăра вара вырăссем — 15 миллион çын, Донбасс пĕтĕмпе тенĕ пекех вырăссенчен тăрать, Харьковра вырăссем пурăнаççĕ, Крымра — 66 процентне вырăссем. Куратăр ĕнтĕ, лозунг кăларса тăратни çеç çителĕксĕр, ун пирки шухăшласа пăхмалла. Ала пустарнине пухса çÿрени те ыйтăва татса пама пулăшсах каймасть. Эстоние илер. Унта пурăнакан çынсенчен 40 процентне мĕн авалтанпах славянсем пулнă. Вĕсем кунта ĕмĕртенпе пурăннă. Халĕ, акă, Эстонире урăхла чĕлхепе калаçакан автономиллĕ район йĕркеленет. Тен, сасартăк Эстони Совет Союзĕнчен тухас ыйтăва кăларса тăратĕ, мĕнех, эпир вара пайланса кайăпăр-и? Çак çул-йĕр пысăк çухатусем кÿме, юн юхтарма пултарать.

Сасă: Совет Союзĕ хăй çĕнелсе улшăнмасть пулсан, мĕнле пулмалла-ха?

М. С. Горбачев: Килĕшместĕп, эпир çĕнетÿ çул-йĕрĕпе кусса пыратпăр. Çавна май эпĕ çĕнетĕвĕн тепĕр ыйтăвĕ патне — экономика патне куçатăп. Производителлĕ вăйсене эпир унитарлă государствăри пек аталантарса пытăмăр тата вырнаçтарса

сÿтсе явма пулать тата сан сурăм хыçĕнче такам тăманнине тата сана айăпласа тăвăрма хатĕр пулманнине сирĕн шанса тăма пулать. Çакă вăл çĕнетĕвĕн чи пирвайхи тата чи кирлĕ çĕнтерĕвĕ: паян эпир мĕнпур ыйтусене лăпкăн, ответлăха туйса, пур енлĕн сÿтсе явма пултаратпăр. Чăнах та, демагогсемпе хĕтĕртекенсемсĕр те пулмасть. Анчах, ман шутпа, чи кирли çĕнтеретех: хамăр пурнăçăн мĕнпур енĕсене эпир уççăн сÿтсе явма пултаратпăр.

Тепĕр енчен, федераци хăй улшăнсан, çынсем хăйсене лайăхрах туйма пуçласан çеç пурăнма пултарать çĕнетÿ. Эсир астăватăр-и, эпир социаллă пурнăçпа экономикăна хăвăртрах аталантарассинчен пуçларăмăр тата вăл пурнăçа кĕме пултарайманнине куртăмăр. Чи малтанах, политика системин ыйтăвĕсене татса пама кирли палăрчĕ. Çавăнпа та эпир вĕсем çине куçрăмăр. Тата çакă питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ: нацисем хушшинчи хутшăнусен ыйтăвĕсем çинчен те манмалла мар. Нацисем хушшинчи хирĕçÿсене федерацири лару-тăрăва, кашни республикăри лару-тăрăва тата кашни халăха хăйне улăштарсан çеç сирсе яма пулать, çакна эпĕ çирĕп шанса тăратăп. Акă, пăхăр-ха: тĕрĕслĕхе кăшт çеç урăхларах ăнланни Эстонире, Молдавире мĕн патне илсе çитерчĕ, лару-тăру мĕн тери йывăрланчĕ. Эсир хăвăр та туятăр пулĕ ĕнтĕ, пирĕн хушăмăрта та темле сивĕ çил вĕрме пуçларĕ. Çакăншăн пуçларăмăр-и вара эпир çĕнетĕве? Çук! Апла пулсан, федерацири çĕнетĕве пирĕн пурне те лайăхрах пултăр тесе тумалла, унăн пĕлтерĕшне тата мĕнпур республикăсен вырăнне çĕнĕлле хакламалла.

Пĕчĕк е пысăк халăх — вĕсем пĕр тан правалла. Çавăнпа та вăл темле пĕчĕк пулсан та, халăх шăпине шута илменни — питĕ хăрушă политика, юлташсем, малашлăхсăр политика. Мĕншĕн тесен кунта, сирĕн патăрта, кирек-хăш халăх — белоруссем, поляксем, украинсем пурăнаççĕ пулсан та, вĕсем те сирĕн пекех хăйсен ачисем çак çĕр çинче, хăйсем çуралса ÿснĕ çĕр çинче телейлĕ пурăнасса шанаççĕ. Çак çĕр çинче пĕтĕмпех çакăнта пурăнакан халăх кăмăлне шута илсе ĕçлемелле. Енчен те ăна мĕн те пулсан килĕшмест пулсан, урăхла политика, ытти мерăсем çинчен шухăшламалла. Экономикăра çеç мар, культурăра, чĕлхере, политика процесĕсенче те — çынсем çĕр çинче хăйсене хуçа пек туйма пултарччăр.

Пирĕн федерацин çĕнĕ сăн-сăпачĕ çакăн пек пулма

вара 37 процентне ют çершывсен капиталĕ пулнă. Пире вара: хăйтĕллелейлĕх, хăйтĕлленĕлĕх, теççĕ. Пĕлетĕр-и, ку вăл демагоги евĕрлĕрех пулса тухать. Кÿренмелле ан пултăр — каллех фактсене аса илетĕп. Колониализм системине çапса аркатнăранпа, нумай государство политика тĕлĕшĕнчен хăйтĕллĕн аталанма пуçланăранпа, 40 çул иртрĕ. Анчах тĕрĕссипе вĕсем хăйсем тĕллĕн аталанман тата аталанма та пултараймаççĕ. Вĕсем чĕртавар парса тăракан çĕршывсем пулнă, халĕ те çаплах. Ресурсене йÿнĕпе туянаççĕ тата ĕç вăйĕпе те йÿнĕллех усă кураççĕ. Метрополисенче вара пурнăç шайĕ ÿснĕçемĕн ÿсет. Çапла вара, енчен те хăшĕ те пулин паян пирĕн çĕршыври сыхăнусене татас, пĕр-пĕр республикăна, пĕчĕк халăха айккине пăрса хăварас тет пулсан — эпĕ, юлташсем, çак политикăна хутшăнмастăп. Эпĕ хам мĕне ĕненнине тÿрре кăларма тăрăшатăп. Хамăрăн пĕрлĕх пирки пирĕн çĕнĕлле шухăшласа пăхмалла: ку вăл Российăшăн та, Литвăшăн та, Украинăшăн та, Арменишĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çĕршывăн паянхи руководстви тата пулас руководстви ку енĕпе тата уçăмлăрах ĕçлеме шутлать.

Сасă: Михаил Сергеевич, компарти çинчен нимĕн те каламарăр.

М. С. Горбачев: Компарти çинчен. Енчен те эпир çĕнетĕвĕн кăткăс ыйтăвĕсене татса памалли çул-йĕрсене интеграци, коопераци процесĕсене сыхласа хăварса, федерацие çĕнетсе лайăхлатни çинче куратпăр пулсан, енчен те эпир экономикăра, ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен килĕштерсе ĕçлемелли çĕнĕ çул-йĕрсем шыратпăр пулсан, пĕтĕм обществăна çĕршыва централизаци йĕркинчен хăтарнă май парти тĕп, ертсе пыракан вăй пулса тăрать. Çакă вăл Литвăна çеç мар пырса тивет. Парти мĕнпур процессене тăрăннăн тишкерме, çав тĕллевсене пурнăçланă чухне çынсен интересĕсене пĕрлештерме тивĕçлĕ. Çавăнпа та эпĕ — хăйтĕлленлĕхшĕн, чи анлă хăйтĕлленлĕхшĕн, урăхла пулма пултараймасть. Ыйтăва пăхса тухма вăхăт çитрĕ. Январьте эпир хамăрăн программăлла документра, парти сÿтсе явакан документра çĕннине нумай калăпăр. Çапла вара, эпĕ чи анлă хăйтĕлленлĕхшĕн, КПССри хăйтĕлленлĕхшĕн.

М. С. Горбачев Вильнюс çыннисемпе В. И. Ленин ячĕпе хисепленекен площадьре, Т. Шевченко урамĕнче иртнĕ калаçусем сехет ытла пынă. Ун хыççăн вăл топливо аппаратурин пĕрлешĕвне

Усалла çеç пулнă.

Завод проходнойĕнчен иртсенех Михаил Сергеевича пухăннисем тăвăллăн ала çупса кĕтсе илнĕ, саламланă, хăйсем патне килнĕшĕн тав тунă. М. С. Горбачев топливо насусĕсем пухакан цехсем тăрах тата механика цехĕ тăрах иртнĕ. Ĕç, йăла условийĕсем, професси [illegible] майсем, çынсем хушшинчи хутшăнусем, нацисем хушшинчи хутшăнусем — çакăн çинчен калаçнă вăл Т. Тумас, Л. Адамович, И. Миллем, С. Смола, В. Гражданов рабочисемпе тата ыттисемпе те. Унпа калаçакансем хушшинче литва, поляк, белорус, вырăс наци представителĕсем пулнă. Çак коллективра çеç мар вăй хураççĕ вĕсем. Литва — нумай нацилле республика. Нацисем хушшинче хирĕçÿ кăларма, шовинистла кăмăл-туйăм çуратма юрамани çинчен калана. Литвăна çĕнетÿ çулĕпе малалла анаçла куçса пыма пулăшакан тĕп услови — республикăра пурăнакан мĕнпур наци представителĕсен туслăхĕнче тата пĕрлĕхĕнче пулни çинчен калаçнă.

Калаçусенчен пĕрне хутшăннă А. Бразаускас тĕп наци представителе пулман хăшпĕр херарăмсем пашарханни çинчен каланине хирĕç çапла ответленĕ: «Мĕншĕн пашарханатăр-ха? Куратăр ĕнтĕ, никама та тĕкенмесĕр, кирек мĕнле наци çыннине хăратмасăр пурăнатпăр».—Сăртла Карабахри пек юн юхтарасси патне çитмен тата çавăн пек пулма памалла та мар, тенĕ çавна май заводри ĕçченсенчен пĕри И. Ивашкевич поляк. Анчах сепаратистла кăмăл-туйăмлă çынсем республикăра литвасемпе республикăра пурăнакан ытти наци представителĕсем хушшинчи хутшăнусенче сивĕ туйăм çуратнине-çынсем пĕрре мар асăрхана.

Республикăри лару-тăру улшăнсах пыни пирки шухăшлани те пăшăрхантарать пулĕ, тенĕ М. С. Горбачев. Лару-тăрăва йывăрлатасси çинчен мар, ăна мĕнле майпа лайăхлатасси çинчен пĕрле шухăшламалла.

М. С. Горбачевпа калаçнă çынсен вăл Литвăна, пĕтĕм Союза аталантармалли çул-йĕрсем пирки мĕн шухăшлани пирки ыйтса пĕлес килнĕ. Çавна май унăн нумай ыйту çине ответлеме тивнĕ. Заводăн представителĕсем умĕнче сăмах каласа, çав ыйтусене татах анлăрах, туллинрех çутатса панă.

Каçхине М. С. Горбачев Пичет çуртĕнче республикăри творчество тата наука интеллигенцийĕн представителĕсемпе тĕл пулнă.

Кандидатсене регистрациленĕ

Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиссийĕсем çак кандидатсене регистрациленĕ:

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ЛЕНИН РАЙОНĔ ТĂРАХ

10-мĕш Шумилов суйлав округĕ

Валентин Борисович **Исаев**, 1953 çулта çуралнă, «Шупашкарти электроаппаратура завочĕ» производство пĕрлешĕвĕн слесарь-инструментальщикĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Сергей Валерьевич **Маслов**, 1964 çулта çуралнă, Шупашкарти почтамтăн электромеханикĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать.

17-мĕш Заречнăй суйлав округĕ

Вера Васильевна **Балепскал**, 1942 çулта çуралнă, «Чувашспецстрой» трестăн куçса çÿрекен механизациленĕ «Чебоксарская» колоннин бригадирĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать;

Алексей Сергеевич **Волков**, 1948 çулта çуралнă, республикăри хуçалăхсен пĕрлехи «Чувашагросервис» пĕрлешĕвĕн автобазин пай начальникĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Николай Иванович **Саблин**, 1934 çулта çуралнă, чăх-чĕп ĕрчетекен «Чувашское» производство пĕрлешĕвĕн директорĕн заместителĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать.

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ КАЛИНИН РАЙОНĔ ТĂРАХ

22-мĕш Октябрь суйлав округĕ

Валерий Виссарионович **Андреев**, 1962 çулта çуралнă, халăх депутачĕсен Калинин район Совечĕн ĕçтăвкомĕн шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен инспекторĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Вениамин Никифорович **Никифоров**, 1945 çулта çуралнă, ДОСААФ Чăваш облаçть комитечĕн председателĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Марат Ильдарович **Ягофаров**, 1961 çулта çуралнă, «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнчи çамрăксен сурт-йĕр комплексĕн организациллĕ комитечĕн председателĕ, ВЛКСМ членĕ, Шупашкарта пурăнать.

34-мĕш Пятино суйлав округĕ

Владислав Владимирович **Дроздов**, 1942 çулта çуралнă, «Чувашспецмонтаж» территори монтаж комплексĕн начальникĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Александр Иванович **Иванов**, 1937 çулта çуралнă, Шупашкарти тимĕр-бетон конструкцисен 9-мĕш завочĕн тĕп технологĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Людмила Ивановна **Исакова**, 1945 çулта çуралнă, «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕн наука тĕпчев пайĕн лабораторийĕн начальникĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать.

38-мĕш Кăнтăр суйлав округĕ

Авенир Андреевич **Петровский**, 1955 çулта çуралнă, Шупашкарти ятарлă 21-мĕш шкул учителĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать;

Борис Николаевич **Якушкин**, 1938 çулта çуралнă, Шупашкарти «Стройкерамика» завод директорĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать.

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ МУСКАВ РАЙОНĔ ТĂРАХ

41-мĕш Университет суйлав округĕ

Владимир Васильевич **Петров**, 1959 çулта çуралнă, Шупашкарти «Контур» заводри токарь, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать.

45-мĕш Приволжски суйлав округĕ

Владимир Данилович **Данилов**, 1946 çулта çуралнă, И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство университечĕн доценчĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Валентина Анисимовна **Салтыкова**, 1948 çулта çуралнă, «Центрсоюзăн Мускаври кооператив институчĕ» потребительсен кооперацийĕн вĕренÿпе наука комплексĕн Шупашкарти филиалĕн доценчĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать.

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ КАЛИНИН РАЙОНĔНЧИ СУЙЛАВÇĂСЕНЕ ПĔЛСЕ ТАМА

СССР халăх депутачĕ Леонид Федорович Валентинов граждансене 1990 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче 16 сехетрен пуçласа 21 сехетчен Калинин райĕçтăвкомĕн 110-мĕш кабинетĕнче йышăнать.

КАЛИНИН РАЙОН СОВЕЧĔН ĔÇТĂВКОМĔ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕнче

Чăваш совет музыка искусствине тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Юрий Александрович **Прокопьева** — Чăваш государство музыка театрĕн вокалист-солистне, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистне «Чăваш АССР халăх артисчĕ» хисеплĕ ят панă.

* * *

Чăваш совет хореографи искусствине тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Галина Федоровна **Никифоровăна** — Чăваш государство музыка театрĕн балет артисткине «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ» хисеплĕ ят панă.

Сĕнÿсемпе паллашнă

Январĕн 11-мĕшĕнче республикăра КПСС Центральнăй Комитечĕн членĕ, СССР Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ, СССР Министрсен Совечĕн химипе вăрман комплексĕ енĕпе ĕçлекен бюровĕн председателĕ В. К. Гусев пулнă. Вăл Вăрнарти хими заводне тата «Химпром» пĕрлешĕве çитсе курнă, производствăпа, çак предприятисене реконструкцилес ĕç мĕнле пынипе паллашнă, рабочисемпе тата специалистсемпе тĕл пулнă.

Çав кунах каçхине КПСС обкомĕн бюровĕн анлă ларăвĕнче республикăра поликарбонат туса кăларассине ăçта вырнаçтарасси çинчен пĕр-пĕрин шухăшĕсемпе паллашнă. Саксем тухса калаçнă: СССР халăх депутачĕ А. П. Айдак, Чăваш АССР Çутçанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен государство комитечĕн председателĕ Ж. Г. Строкач, хими наукисен докторĕ, И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство университечĕн профессорĕ О. Е. Насекин, «Химпром» производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Л. С. Шевницын, «Агрохим» государство агрохими ассоциацийĕн председателĕн заместителĕ М. Г. Кирьянов, Çĕнĕ Шупашкар хула Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ Н. А. Матросов, КПСС обкомĕн бюровĕн членĕсем Г. Н. Волков, А. А. Леонтьев, А. М. Леонтьев.

КПСС обкомĕн бюровĕн ларăвĕнче çавăн пекех СССР Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ В. К. Гусев тата КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А. П. Петров тухса калаçнă.

КПСС обкомĕн бюровĕ республикăра поликарбонат туса кăлармашкăн экологи тĕлĕшĕнчен тĕппипех хăрушсăрлăх гарантийĕ пама пултаракан условисем туса хурсан çеç тытăнма май пуррине йышăннă. Чăваш АССР Министрсен Советне ученăйсемпе специалистсене, çак ĕçпе интересленекен мĕнпур организацисене, çав шутра Чăваш АССР Çутçанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен государство комитетне тата çутçанталăка сыхлакан обществăн республикăри организацине хутшăнтарса, халăх шухăшне шута илсе, çак ыйтăва тепĕр хут тĕпчеме, конкретлă сĕнÿсем хатĕрлеме хушса хăварнă.

Иккĕмĕш хут космосра

ВĔÇЕВЕ ЙĔРКЕЛЕСЕ ТĂРАКАН ЦЕНТР, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Пилот тытса пыракан «Мир» комплекс экипажĕ уçă тĕнче уçлăхĕнче ĕçсен черетлĕ тапхăрне пурнăçланă. Орбитăри комплексăн çÿлти пайне иккĕмĕш хут уçă космоса тухса çĕнĕ наука приборĕсем вырнаçтарса лартнă тата 1988 çулхи декабрьте Совет Союзĕпе Франци экипажĕ вĕçнĕ вăхăтра вырнаçтарнă конструкци материалĕсен тĕслĕхĕсене сÿтсе илнĕ.

Уçă космоса Александр Викторенкăпа Александр Серебров январĕн 11-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 11 сехет те 01 минутра станцин куçăм пÿлĕмĕнчи люк витĕр тухнă.

Станцин тулашĕнчи сийĕ çумне экипаж металран туман материалсен тĕслĕхĕсене, «Квант» астрофизика модулĕ çине — «Арфа» аппаратура вырнаçтарса лартнă. Çак аппаратура Çĕрĕн ионосферипе магнитосферине малалла тĕпчеме тивĕçлĕ. Ун хыççăн космонавтсем ытти материалсен тăракан панеле сÿтсе илнĕ. Орбитăри комплекс тулашĕнче пурнăçлама палăртнă ĕçсене вĕçленĕ хыççăн командирпа бортинженер пĕр карап çинчен тепĕр карап çине куçмалли пÿлĕме таврăннă, черетлĕ специализациленĕ модуле йышăнас енĕпе хатĕрленмелли ĕçсене пурнăçланă. Космонавтсем «Квант-2» модуль вырнаçнă тĕлти сыпăнмалли агрегата сÿтсе илнĕ тата ăна станцин тепĕр вĕçĕнчи айккинчи пайне вырнаçтарса хунă.

Экипаж уçă космосра пурĕ 2 сехете те 54 минут пулнă.

Пилот тытса пыракан комплекс вĕçевĕ малалла пырать. Александр Викторенкăпа Александр Серебров хăйсене лайăх туяççĕ.

Атăлпа Урал тăрăхĕнчи автономиллĕ республикăсенче

Çитĕнӳсем пысăк

Азнакаево районĕнчи «Азнакаевский» совхозри выльăх-чĕрлĕх фермин арендаторĕсем иртнĕ çула пысăк çитĕнӳпе вĕçленĕ. Вĕсем кашни ĕнерен вăтамран тăватă пин килограмм ытла сĕт суса илнĕ. Унччен хи çул шайĕнчен çакă 400 килограмм ытларах. Совхоз фермăран 300 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Сĕт-çу фермин коллективĕ аренда меслечĕпе ĕçлеме тытăнни çакăн пек çитĕнӳ тума май панă. Çынсем хăйсен ĕçне тĕплĕрех пурнăçлама тытăннă, юлашкинчен пулакан результатпа ытларах интересленнĕ. Кунта ĕне кĕтĕвне ăратлă выльăхпа çĕнетсех тăраççĕ, сĕт нумай антаракан ĕнесене тытма тăрăшаççĕ. Выльăх апатне хатĕрлесе кăна параççĕ, рациона çирĕп пăхăнаççĕ. Фермăна хĕле лайăх хатĕрленĕ, пур çĕрте те таса, йĕркеллĕ. Çак мерăсем сĕт суса илессине ӳстерме çеç мар, пысăк пахалăхлă продукци илме те пулăшаççĕ. Ферма коллективĕ пĕтĕм продукцие пĕрремĕш сортпа кăна ăсатать.

Экономикăн çĕнĕ механизмне лайăхрах алла илес тĕллевпе кунта ĕçлекенсем Целиноград облаçĕнчи пĕр паллă совхозра пулса курнă, унти паха опытпа паллашнă.

«Советская Татария».

Цех тупăш парать

Ичалковски районĕнчи «Луч коммуны» колхозра хуçалăхăн хушма промыслисен цехĕ пысăк тупăш парать. Кунта целлофан хутассем туса кăлараççĕ.

Цех пысăк мар. Унта пĕтĕмпе те 14 çын çеç ĕçлет. Мĕнпур тупăшран тăкаксене кăларнă хыççăн юлакан укçа-тенкĕн 42 процентне кунта ĕçлекенсене тӳлеççĕ, тепĕр 58 процентĕ колхоз кассине каять. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, хуçалăх цехран çулталăкра 270 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

«Советская Мордовия».

Ют чĕлхесене вĕренеççĕ

Ижевскри предприятисенче халĕ чикĕ леш енчен килнĕ çынсем вырăнти хаçатсен журналисчĕсенчен те ытларах пулаççĕ пулĕ.

Икĕ суйлав хушшинче

ЫРĂ УЛШĂНУ— КУÇ ТУЛЛИ

Çĕрпӳ районĕнчи Рынкă ял Совечĕ 7 ялтан тăрать. Пурте кунти совхоз-техникума кĕреççĕ. Икĕ суйлав хушшинче çак ялсен пурнăçĕнче мĕнле улшăнусем пулса иртнĕ-ха? Пирĕн корреспондент Рынкă ял Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕнчен И. Д. Тимофеевăран çакăн çинчен каласа пама ыйтнă.

— Икĕ суйлав хушшинчи тапхăр пысăках мар. Çапах та каласа памалли пурах. Чи малтанах акă мĕн палăртмалла: ялсен сăн-сăпачĕ çĕнелсе улшăнни совхоз-техникумăн экономики çуллен вăйланса пынине кăтартса парать. Мĕн каланине çирĕплетме пĕр-икĕ тĕслĕх илер-ха. Виç-тăватă çул каярах кашни ĕнерен çулталăкра 1.800—2.000 килограмм сĕт суса илме ĕмĕт-тĕллев тытнă. Ун чухне çак хисепе те пысăк çитĕнӳ вырăнне хунă. Пĕлтĕр кашни ĕнерен 3.646 килограмм суса илтĕмĕр. Уйрăмлăх пĕчĕк мар. Çулталăкра кашни ĕнерен, унчченхи çулпа танлаштарсан, 104 килограмм нумайрах сĕт сунă. Çакă государство планне срокчен тата ирттерсе тултарма май пачĕ.

Сĕтĕн çуллăхĕ пысăк, пахалăхĕ лайăх. Ку вăл ĕнесене тутлăхлă апатпа тăрантарнине, таса витере усранине кăтартса парать. Пĕлтĕр пур фермăсен çурчĕсене те çĕнетсе тухрăмăр. Алă вĕççĕн тунă ĕçсене комплекслă механизациленĕ. Кормокухньăсенче хутăш апачĕ хатĕрлеме, ăшă парса тăма ку чухнехи оборудовани вырнаçтарса лартнă.

Фермăсенчи тепĕр пысăк улшăну вăл — сăвакан ĕнесен ăратне çĕнетсе лайăхлатни. Халĕ хура-ула ĕнесем усратпăр. Кăçал вĕсен йышне тата ытларах ӳстерме палăртнă. Çакăн усси пысăк. Ĕне сăвакансем хушшинче социализмла ăмăрту çĕнĕ вăйпа сарăлчĕ. Вĕсем каланă тăрăх, сĕт нумай антаракан ăратлă ĕнесене пăхма та лайăхрах. Акă, Вера Николаевăпа Анна Шогулева иртнĕ çул кашни ĕнерен 4.294—4.300 килограмм сĕт суса илнĕ. Фермăсенчи тепĕр çĕнĕлĕх — пĕлтĕр дояркăсем икĕ сменăпа ĕçлеме тытăннă. Ĕç укçи хушăннă.

Выльăх-чĕрлĕх ферминчи ĕçсене совхоз дирекцийĕпе специалистсем йĕркелесе пыраççĕ, теме пултараççĕ. Тепĕр майлă каласан, ял Совечĕн ĕçтăвкомĕн тӳпи палăрсах та каймасть пек пулса тухать. Çапла шухăшлани, ман шутпа, тĕрĕс мар. Акă мĕншĕн. Хуçалăха ертсе пыракансенчен чылайăшĕ депутатсем, яланхи комиссисен ĕçне тӳрремĕнех хутшăнакан çынсем. Апла пулсан, ял Совечĕн ĕçтăвкомĕ тата яланхи комиссисем совхоз пурнăçĕпе çыхăннă кашни ыйтăва пĕрле татса параççĕ. Палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртме депутатсем тӳрремĕнех хутшăнаççĕ.

Ял Совечĕн сессийĕсенче, ĕçтăвкомăн тата яланхи комиссисен ларăвĕсенче специалистсен, уйрăмсен заведующийĕсен отчечĕсене итлетпĕр. Депутатсем, çитменлĕхсене палăртнипе пĕрлех, вĕсене пĕтерме сĕнӳсем параççĕ. Ахальтен мар комиссисен членĕсем сессисемпе ларусем умĕн фермăсенче, уйрăмсенче пулаççĕ, унти лару-тăрупа паллашаççĕ. Çак ĕçре депутатсене специалистсем пулăшаççĕ. Ку вăл хуçалăха малалла аталантарассипе çыхăннă ыйтусене ял Совечĕн ĕçтăвкомĕпе совхоз-техникум дирекцийĕ пĕр шухăш-ĕмĕтлĕ пулса татса панине пĕлтерет. Кун пек чухне пĕрин ĕç меслечĕ теприн опычĕпе пуянланса пырать.

Пурăнмалли çурт-йĕр лартасси — ялта та кăткăс ыйтусенчен пĕри. Укçа-тенкĕ кирлĕ. Унтан та ытларах строительство материалĕсем çукки чарса тăрать. Ял Советне кĕрекен ялсенче пушă çуртсем пур. Пĕрлехи вăйпа 5 çурт туянтăмăр, тĕпрен юсарăмăр. Пахча вырăнĕсене çав çуртсене пурăнма куçнă кил-йыша çирĕплетсе панă. Малашне çак ырă йăлана йĕркене тата анлăрах сарса пырăпăр.

Уйрăм çынсем аренда меслечĕпе выльăх-чĕрлĕх самăртма кăмăл тăвакансем те пур. Ял Совечĕн ĕçтăвкомĕ ырă пуçару тăвакансене пулăшма яланах хатĕр. Вĕсене ялсенчи пушă пахчасенче выльăх апачĕ хатĕрлеме ирĕк панă. Уйрăм çынсен хăшпĕр хăй килĕнче пĕлтĕр 180 сысна самăртса государствăна сутнă. Кунпа пĕрлех 87 ĕне-выльăх самăртса панă. Кашнин чĕрĕ виçи 400 килограмм тайнă.

Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче депутатсене панă тĕп наказсенчен пĕри вăл — совхоз-техникумăн экономикине çĕклесси пулнă. Суйлавçăсем, чи малтанах, тырпул тата выльăх апачлĕх культурăсен тухăçлăхне ӳстерессине асра тытнă. Депутатсем сĕннипе, ĕçтăвком ларăвĕнче специалистсемпе уйрăмсен заведующийĕсен отчечĕсене итлерĕмĕр. Кашни хăйĕн малашнехи ĕмĕт-тĕллевĕ тата ăна мĕнле майпа пурнăçа кĕртме палăртни çинчен каласа пачĕ. Хăйсен сăмахне çилпе вĕçтермерĕç. Иртнĕ çул, акă, типĕ килчĕ. Апла пулин те, совхоз кашни гектартан 25,1 центнер тырпул туса илчĕ. Çакăнта В. Ивановпа В. Монин механизаторсен тӳпи те пур. Уйхир ĕçченĕсем хушшинчи социализмла ăмăртура А. Иванов ертсе пыракан 3-мĕш уйрăм мала тухрĕ. Кунта 180 гектар çинчен 32,9 центнер ыраш пухса кĕртнĕ. Çĕрулми тухăçĕ те малтан палăртнинчен пысăкрах.

Выльăх-чĕрлĕхе тăрантарма 346 гектар çинче кукуруза туса илетпĕр. Ăна тĕштырă технологийĕпе акнă. Çакă кукуруза пуçĕнчен кăна 200 тонна ытла силос хывса хăварма май парать. Унăн тутлăхĕ пысăк. Çакă тĕштырă нумай перекетлесе хăварма пулăшать.

Икĕ суйлав хушшинчи çулсенче совхоз-техникумăн укçан илекен тупăшĕ хушăнса пынă. Пĕлтĕр, сăмахран, 1.300 пин пулнă. Çавна май строительство ĕçĕсем, уйрăмах пурăнмалли çуртсем лартасси, анлăн сарăлчĕ. Кашни ялта 5—6 çемье çĕнĕ çурта пурăнма кĕрет. Юлашки вăхăтра кăна 4-шар хваттерлĕ 4 çурт ĕçе ятăмăр. Халĕ тата 60 хваттерлĕ тепĕр çурт тăватпăр.

Ял çыннисен пурнăçĕ çуллен лайăхланса пырать. Кашни кил-çуртра тенĕ пекех телевизор, радиоприемник, йăлара усă курмалли хатĕрсем пур. Çăмăл автомашинăсемпе мотоциклсем 30 ытла шутланаççĕ.

Анчах çĕнетсе улăштармалли татах та нумай. Ун пирки ял çыннисен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче, депутата суйлама тăратнă кандидатсемпе ирттерекен тĕлпулусенче усăллă калаçу пырать. Çак шухăша, чи малтанах, суйлавçăсен наказĕсенче тĕп вырăнпа хураççĕ.

Ял Совечĕн территорийĕнче Культура çурчĕ, клуб, библиотека, вăтам тата тулли мар вăтам шкулсем, ача-пăча сачĕ, фельдшер пункчĕ

Урăх çĕршывсенче

Хак ӳсет

— Савнă паян! Мана çу пачкин вунултăмĕш пайне касса парсамăр, тархасшăн.

Хăйĕн ыйтăвĕ çынсене тĕлĕнтересрен именсе тата çынна чармантарма тивнĕшĕн пăшăрханса, тирпейлĕ карчăк черетри çынсем çине айăплăн пăхса илчĕ. Анчах поляксен çавранăçулăхĕ кунта та палăрчĕ: черетре ватă çынна айăпласа е унран тăрăхласа асăрхаттаракан никам та пулмарĕ. Çамрăк продавщица вара çу пачкине хăй умнерех куçарса хучĕ те ăна касма пуçларĕ...

Варшавăра пĕчĕк тăкăрлăксенче тĕл пулакан пĕчĕк магазинсенчен пĕринче эпĕ çакна курнă чухне Польшăн пĕтĕм апат-çимĕç комплексĕн ĕçĕнче «рынок механизмĕсене» ĕçе кĕртме тытăннăранпа виççĕмĕш уйăх пуçланнăччĕ. Хаксем питĕ нумай ӳснине пула сасартăк хăраса ӳкнĕ халăх лăпланма пуçланаччĕ ĕнтĕ. Анчах ытларах та ытларах çынсем, уйрăмах ватă çынсем магазинсенче паян мĕн туянма май пуррине шута илсе хăйсен укçине çине-çинех шутласа пăхнине курма çăмăлах марччĕ.

Иртнĕ çу вĕçĕнче Польша правительстви рынок пулăшнипе экономикăна, ваккăн сутмалли хаксен системине йĕркелесе çитерессе, производство тупăшлăхне ӳстерессе, укçа йӳнелсе пынине чарса лартасса шанса, хаксене рынокри хаксене кура палăртрĕ. Анчах хаксене ӳстерме ытти вăйсем хутшăнчĕç. Хресченсем тата апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларакан ытти çынсем, суту-илӳ предприятийĕсем тата ялхуçалăх чĕртаварĕнчен апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларакан фирмăсем хаксене çав тери ӳстерсе ячĕç. Хаксем нумай хутчен ӳсрĕç. Çулталăк тăршшĕнче вĕсем мĕн чухлĕ ӳснине Польшăн тĕп статистика управленийĕ те шутласа кăлараймасть. Аш-какай тата питĕ кирлĕ ытти нумай продуктсем туса кăларасси чакрĕ. Хресченсем хăйсен таварĕсене сутма тăхтаса тăраççĕ.

Правительствăн «Речь Посполита» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, врачсем акă мĕн пирки шикленеççĕ: хаксем пысăк пулнине кура апат-çимĕçре нумай продуктсемпе усă курма пăрахни поляксен сывлăхне сиен кӳрет. Нумай çынсем апат-çимĕçрен кирлĕ чухлĕ калори илеймеççĕ. Учительсем шкулсенче нумай ачасем выçă пирки тăн çухатнине палăртаççĕ.

Анчах «Солидарность» профпĕрлешӳ туса хунă правительство (ăна Министрсен совечĕн председателĕ Т. Мазовецкий ертсе пырать) хуçалăх реформисене малашне те палăртнă çул-йĕрпе пурнăçа кĕртсе пыма шутлать. Çĕнĕ çул умĕн Польша парламенчĕ социаллă пурнăçпа экономикăри лару-тăрăва нумай йывăрлатакан законсен проекчĕсене йышăннă. Çав проектсене «Бальцерович

не чакарасси. Правительство шухăшĕпе, çак меслет укçа йӳнелсе пынине хирĕç кĕрешме пулăшмалла. Производство хăвачĕн пысăк пайне уйрăм çынсен аллине памалла, хуçалăхри йывăрлăхсемпе ăнăçлă кĕрешме пултарайман предприятисене пĕтермелле. Министрсен совечĕн председателĕн заместителĕ, Польшăн финанс министрĕ Л. Бальцерович каланă тăрăх, çӳлерех асăннă проектсем производство калăпăшне чакараççĕ, чылай предприятисене банкрута кăлараççĕ, ĕççĕр пурăнакансен йышне ӳстереççĕ.

Çĕнĕ законсене ĕçе кĕртнине Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн, Профсоюзсен пĕтĕм Польшăри килĕшĕвĕн представителĕсем Польша халăх хуçалăхне капитализм системи çине куçарни вырăнне хураççĕ. Вĕсем правительствăна экономика системине улăштарнă чухне ĕççыннисен интересĕсене шута илме кирли çинчен пĕр хут çеç мар ăнлантарнă. Сеймăн Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕнчен суйланă депутачĕсем çапла асăрхаттарнă: капитализм системи çине куçни пĕтĕм халăха ырлăх туса парас çукки çинчен суйлавçăсене тӳрĕ кăмăлпа пĕлтермелле. Польшăра çапла шутлаççĕ: капитализм çулĕ çине тăрса кризисран тухмалли тапхăрти йывăрлăхсене пуянсем кăна çăмăллăн тӳссе ирттерме пултараççĕ. Экономистсем шутланă тăрăх, çĕнĕ реформăсем 1990 çулта халăх пурнăçне чылай йывăрлатĕç: хаксем 600 процент ӳсеççĕ, ĕççĕр пурăнакансен йышĕ 400 пин çынна çитет.

Январьте çĕркăмрăк, электроэнерги тата энерги паракан ытти продукци хакĕ 4—5 хут ӳснĕ. Бензин хакĕ икĕ хут ӳснĕ. Кулленхи пурнăçра электричествăпа усă курнăшăн, вĕри шывшăн, çуртсене ăшăтнăшăн, газшăн поляксен халĕ 400 процент хаклăрах тӳлемелле. Хваттер хакĕ, почтăпа усă курнăшăн тӳлемелли хаксем ӳсеççĕ.

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ партин çитес съездĕнче сӳтсе явма программăллă деклараци проекчĕ хатĕрленĕ. Унта çапла каланă: «Польша пуласлăхне капитализмпа мар, демократилле социализмпа çыхăнтармалла. Демократилле социализм вăл çĕршыва ирĕклĕх, демократи, социаллă тĕрĕслĕх тата пĕр шухăшлăх туса хурассине пĕлтерет. Польша экономикине тĕпрен çĕнĕлле йĕркелемелле, рынок экономикин принципĕсен никĕсĕ çине экономикăра çĕнĕ йĕрке туса хумалла, экономика эффективлăхне социаллă тĕрĕслĕхпе çыхăнтармалла. Государствăн экономикăна йĕркелесе тăракан социаллă политикине вăйлатмасăр çак тĕллеве пурнăçа кĕртме çук».

«Луч коммуныя» колхозра хуçалăхăн хушма промыслисен цехĕ пысăк тупăш парать. Кунта целлофан хутаессем туса кăлараççĕ.

Цех пысăк мар. Унта пĕтĕмпе те 14 çын çеç ĕçлет. Мĕнтур тупăшран тăваксене кăларнă хыççăн юлакан укçа-тенкĕн 42 процентне кунта ĕçлекенсене тӳлеççĕ, тепĕр 58 проценчĕ колхоз кассине каять. Малтанлăхе шутласа пăхнă тăрăх, хуçалăх цехран çулталăкра 270 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

«Советская Мордовия».

Ют чĕлхесене вĕренеççĕ

Ижевскри предприятисенче халĕ чикĕ леш енчен килнĕ çынсем вырăнти хаçатсен журналисчĕсенчен те ытларах пулаççĕ пулĕ. Урăх çĕршывсенчен килекенсен йышĕ ӳссе пырать пулсан, вĕсемпе калаçма та пĕлмелле. «Буммаш» производство пĕрлешĕвĕн кадрсене хатĕрлекен пайĕ заводри специалистсен икĕ ушкăнне йĕркеленĕ, вĕсене вĕрентме Удмурт государство университетĕнчен специалистсене чĕнсе илнĕ. Пĕр ушкăнрисем — акăлчан чĕлхине, теприсем нимĕç чĕлхине вĕренеççĕ. Пай вĕсене проигрывательсемпе, магнитофонсемпе, вĕренӳ пособийĕсемпе тивĕçтернĕ. Курссенчен вĕренсе тухнă хыççăн завод специалисчĕсем калаçма, кусарма, çырма та вĕренĕç. Вĕсем малашне хăйсен тĕп ĕçĕнче çак пĕлӳпе усă курĕç.

«Удмуртская правда».

Пурнăçланнă «Ĕмĕт»

Мари АССР Верховнăй Совечĕн депутатне Параньга районĕнчи Тукай ячĕпе хисепленекен колхоз председательне Ф. Габидуллина суйлавçăсем ялхуçалăх продукчĕсем сутмалли магазин туса лартма наказ панă. Нумаях пулмасть район центрĕн Тукай урамĕнче вăл хута кайнă. Ăна хуçалăх маспечĕпе туса лартнă. «Ĕмĕт» — çапла ят панă çĕнĕ магазина. Кунта колхозниксем валли чĕрĕ пулă, кăлпасси, çухан, ытти пахчаçимĕç сутаççĕ. Часах çăкăр сутмалли уйрăм тума палăртнă.

Малашне «Ĕмĕт» урлă районти хуçалăхсем государство заказне пурнăçланă хыççăн юлакан продукцин 40 процентне сутма шутлаççĕ, кунтах комбикорм сутмалли склад тума палăртнă.

«Марийская правда».

Завод ӳссе ларĕ

Халиччен Сибай сăрт-ту работникĕсен, строительсен, вĕрмаи хатĕрлекенсен хули пулнă. Малашне вăл машинăсем туса кăларакан хула та пулĕ.

Кăçал кунта автомашинăсемпе тракторсем валли электрооборудовани туса кăларакан пысăк завод тума тытăнаççĕ. Ку завод халĕ тăвакан «АвтоЕлАЗ» пĕрлешӳ валли комплектламалли приборсем парса тăма тытăнĕ.

«Советская Башкирия».

не тата ытларах ӳстерме палăртнă. Çакăн усси пысăк.

сисен членĕсем сессисемпе жарусем умĕн фермăсенче,

те пур. Ял Совечĕн ĕçтăвкомĕ ырă пуçару тăвакансене

туса илчĕ. Çакăнта В. Ивановна В. Монин механизатор-

илмăр. Халĕ тата 60 хватерлĕ тепĕр çурт тăватпăр.

Ял çыннисен пурнăçĕ çулленех лайăхланса пырать. Кашни кил-çуртра тенĕ пекех телевизор, радиоприемник. Йăлара усă курмалли хатĕрсем пур. Çăмăл автомашинăсемпе мотоциклсем 30 ытла шутланаççĕ.

Анчах çĕнетсе улăштармалли татах та нумай. Уншинки ял çыннисен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче, депутата суйлама тăратнă кандидатсемпе иртнерен тĕлпулусенче усăмлă калаçу пырать. Çак шухăша, чи малтанах, суйлавçăсен наказĕсенче тĕп вырăна хураççĕ.

Ял Совечĕн территорийĕнче Культура çурчĕ, клуб, библиотека, вăтам тата тулли мар вăтам шкулсем, ача-пăча сачĕ, фельдшер пункчĕ тата йăла çурчĕ ĕçлеççĕ.

В. КУЗНЕЦОВ.
(Хамăр корр.).

● Н. Николаевăпа А. Шогулена дояркăсем; Г. Андреевпа Ю. Иванов механизаторсем тата Н. Степанов тимĕрçĕ; нумай хватерлĕ çĕнĕ суртсем.

Ю. Дмитриев
фотоӳкерчĕкĕсем.



туса кăларасси чакнă. Хрестиансем хăйсен таварĕсене сутма тăхтаса тăраççĕ.

Правительствăн «Речь Посполита» хаçачĕ кăтартнă тăрăх, врачсем икĕ пин ача пирки шикленеççĕ: хаксем пысăк пулнине кура апат-çимĕçре нумай продуктсемпе усă курма пăрахни поляксен сывлăхне сиен кӳрет. Нумай çынсем апат-çимĕçрен кирлĕ чухлĕ калори илеймеççĕ. Учительсем шкулсенче нумай ачасем выçă пирки тăн çухатнине палăртаççĕ.

Анчах «Солидарность» профпĕрлешӳ туса хунă правительство (ăна Министрсен Совечĕн председателĕ Т. Мазовецкий ертсе пырать) хуçалăх реформисене малашне те палăртнă çул-йĕрпе пурнăçа кĕртсе пыма шутлать. Çĕнĕ çул умĕн Польша парламенчĕ социаллă пурнăçпа экономикăри хаçу-чăрăва нумай вырăнлатакан законсен проекчĕсене йышăнчĕ. Çав проектсене «Бальцеровин планĕ» теççĕ. Вĕсен тĕллевĕ — ĕçсĕрлĕхпе тупăшсене тата вĕсем таварсемпе усă курасси-

[illegible]

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ партин çитес съезĕнче сӳтсе явма программăллă деклараци проектне хатĕрлерĕ. Унта çапла каланă: «Польша пуласлăхне капитализмпа мар, демократиллĕ социализмпа çыхăнтармалла. Демократиллĕ социализм вăл çĕршывра ирĕклĕх, демократи, социаллă тĕрĕслĕх тата пĕрмушăллăх туса хурасси вăл тепет. Польша экономикине тĕпрен çĕнĕлле йĕркелемелле, рынок экономикин принципĕсен никĕсĕ çинче экономикăра çĕнĕ йĕрке туса хумалла, экономика эффективлăхне социаллă тĕрĕслĕхпе çыхăнтармалла. Государствăн экономикăна йĕркелесе тăракан социаллă политикине çак тĕллевпе пурнăçа кĕртмелле».

А. ПОТЕМКИН (ТАСС).
Варшава — Мускав.

ЖУРНАЛИСТСЕН ПРЕМИНЕ ИЛМЕ

РЕСПУБЛИКАРИ ЖУРНАЛИСТСЕН ÇЕМЕН ЭЛКЕР ЯЧĔПЕ ХИСЕПЛЕНЕКЕН ПРЕМИНЕ 1989 ÇУЛШĂН ИЛМЕШКĔН ĔÇСЕНЕ ЙЫШĂНМА ПУÇЛАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНЕ

Премисене журналистикăн тĕп хаçатпа журнал тата радиопа телевидени жанрĕсем тăрăх çырнă идейăпа литература тĕлĕшĕнчен чи лайăх произведенисемшĕн, брошюрăсемшĕн, кĕнекесемшĕн, журналист ĕçĕн сборникĕсемшĕн параççĕ. Вĕсенче çĕнетӳ ыйтăвĕсене витĕмлĕ çутатмалла, пирĕн вăхăтри ĕçсĕрлĕхпе çăнарне тата унăн пултарулла ĕçне усса памалла, производствăн, наукăн, культурăпа моралĕн хальхи кирлĕ ыйтăвĕсене тарăннăн уçса памалла тата тишкермелле, совет халăхĕн ĕçпе çапăçури мухтавлă традицийĕсене кăтартса памалла.

Преми илме тăратнă ĕçсем професси тĕлĕшĕнчен пысăк ăсталăхпа паларса тăма тивĕçлĕ тата вĕсене халăх кăмăлласа вуланине шута илмелле.

Журналист произведенийĕсене комиссие республика, район, хула хаçачĕсен тата нумай тиражлă хаçатсен, журналсен редакцийĕсем, Чăваш АССР Телевиденипе радиовещани государство комитечĕ, Чăваш АССР издательство, полиграфипе кĕнеке сутас енĕпе ĕçлекен государство комитечĕ, КПСС обкомĕн издательстви, Чăваш кĕнеке издательстви, творчество союзĕсем, общество организацийĕсем тата наука тĕпчев учрежденийĕсем тăратаççĕ.

Ĕçсене тăратмалли вăхăт — 1990 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен.

Журналист произведенийĕсене тăратмалли условисемпе сыхăннă ыйтусене Семен Элкер ячĕпе хисепленекен премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие çак адреспа çырса ямалла: Шупашкар хули И. Я. Яковлев проспекчĕ, 13. Пичет çурчĕ, 7-мĕш хут, Чăваш АССР Журналистсен союзĕн правленийĕ. Çак телефонсемпе ыйтса пĕлме пулать: 25-13 83, 21-05-66.

Çутçанталăк хуралĕнче

Çирĕпрех ыйтмалла

Чăваш АССРĕнчи Çутçанталăка сыхлакансен госкомитечĕ «Чувашлес» территорипе производство пĕрлешĕвĕ республикăра вăрмансене çĕнетес тата çутçанталăка хӳтĕлемелли мероприятисене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен ыйту пăхса тухнă.

Юлашки тăватă çулта 18.044 гектар çинчи вăрмансене çĕнетнĕ, вăрман тăрăхĕсенчен пысăкрах вăрмансем йĕркелемелле плансем пурнăçланса пыраççĕ.

Анчах 1986 — 1988 çулсенче 484 гектар çинчи вăрмансем пĕтнĕ. Пушарсене, виçесĕр касниие, начар пăхса тăнине пула вăрмансем нумай сиен тӳсеççĕ. 1984 çулта вăрмана палăртнинчен 229,5 пин кубометр вуммайрах каснă.

Кире вăрман хуçалăхĕ кăна 1984 çулта вăрмана палăртнинчен 200 пин кубометр пумайрах каснă. Улатăр вăрман комбиначĕн çак виçе 65,7 пин кубометр чухлĕ пулнă. Ку комбинат пĕлтĕр 800 гектар вăрман каснă, вăл шутран 760 гектарĕ — çара выран хăварса каснă лаптăк. Кунта пĕлтĕр 730 гектар йывăç лартнă, кăçал 684 гектар кăна. Унсăр пуçне вăрман хуçалăхĕнче çулсерен 214 — 222 пин кубометр чухлĕ йывăç тĕрлĕ майпа касса пĕтереççĕ. Йывăç турттарса тухмалли плана вуншар пин кубометр чухлĕ ирттерсе тултараççĕ.

Шупашкарти механизациленĕ вăрман хуçалăхĕпе Кирери вăрман комбиначĕн склачĕсенче хими наркăмăшĕсем упрамалли условисем питĕ япăх.

Государство комитечĕн коллегийĕ «Чувашлес» производство пĕрлешĕвне 1991 çултан пуçласа вăрмансене йывăçсем хăвармасăр касмалли виçене 1984 çулхи виçене çити чакарма хушнă. Вăрмансене хими имçамĕпе Çутçанталăка сыхлакансен государство комитечĕпе калаçса килĕшмесĕр имçамлама юрамасть.

Чăваш АССР Министрсен Совечĕ сумĕнчи сунар хуçалăх управленийĕпе пĕрле сунарçăсемпе пулăçсен обществи вăрман хуçалăхĕн хăшпĕр предприятийĕсенче çамрăк вăрман тăрăхĕсене ăшнчем таптаса пĕтересрен хӳтĕлеме тĕллев лартнă.

Тавăрса панă

Çутçанталăка сыхлакансен государство комитечĕ халăх хуçалăхĕн объекчĕсене тумалли тата реконструкцилемелли 13 проектран 12-шне туса çитерме хуçисене каялла тавăрса панă.

Канашри керамика материалĕсен заводĕнче, сăмахран, тасатмалли сооружени витĕр тухнă кашшисенче нефть продукчĕсен виçи 4 — 40 хут пысăкрах пулнă, тасатмалли сооруженисенче пухăнса юлакан кашшисене тирпейлес ыйтăва татса паман, тата ытти çитменлĕхсем нумай пулнă.

«Вторцветмет» цех хатĕрлесе панă проектра та усă курнă хыççăн пулакан кашшисен çирĕп виçине, пухăнакан шывсене нефть продукчĕсенчен тĕпшипех тасатмаллине, сывлăша тухакан сиенлĕ япаласен хисепне кăтартман.

«Стройиндустрия» заводăн бетон хутăштаракан цехĕн проекчĕнче те çавăн пек çитменлĕхсемех тĕл пулаççĕ.

М. СИДОРОВ,
ЧАССР Çутçанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен госкомитечĕн пай начальникĕ.

Сад ĕрчетекенсем валли

Коллективлă садпа пахча ĕрчетекенсемшĕн, кирек мĕнле ĕçри пекех, пурнăçра çĕнни, пĕлмелли, куллен усă курмалли пайтах. Юлашки вăхăтра апат-çимĕçре нитрат тӳпи мĕншĕн ӳсрĕ? Тухăçлă улма-çырла тата пахчаçимĕç туса илес тесен, мĕнле сортсем лартса ӳстермелле? Ӳсентăрана сиен кӳрекен чир-чĕрпе хурт-кăпшанкăна хими имçамĕсемсĕр пĕтерме пулать-и? Темĕн те хумхантарать хальхи вăхăтра харпăр хăй участокĕнче апатçимĕç продукчĕсем туса илекенсене.

Ку енĕпе вĕсене çĕнĕрен тухса тăма тытăннă «Сад и огород» хаçат пысăк пулăшу парĕ. Ăна республикăри сад ĕрчетекенсен обществи кăларать. Çĕнĕ хаçат тăватă страницăллă, «Правда» хаçатăн çурма формачĕ пысăкăш.

Пĕрремĕш номерте сад ĕрчетекенсем валли ĕçре кирлĕ пулакан сĕнӳсем сахал мар. Г. Сабановпа Е. Сабанова сад ăстисем, акă, «Вĕри шывпа шăваратпăр» корреспонденцире хăйсем хурлăханпа крыжовник тĕммисене чир-чĕртен тата сиенлĕ хурт-кăпшанкăран мĕнле сыхлани çинчен каласа параççĕ. Çак тĕллевпе вĕсем асăннă ӳсентăрансене çуркунне юр кайса пĕтиччен вĕрекен шывпа шăвараççĕ. Вĕсен çырăвне вуласан, кун çинчен чылай тĕплĕнрех пĕлме пулать.

Пĕр шухăшласан, пахчара йăрансем тăвасси ансат ĕç пек. Анчах кунта та хăйнеевĕр çĕнĕлĕхсем пур. Пахчаçимĕç лартакан йăрансене, сăмахран, тĕмескеллĕ тата çӳлелле хăпартса тума пулать. Çакă чылай ытларах çимĕç туса илме, пахчари çĕр лаптăкне перекетлеме май парать. Кун çинчен хаçатра «Йăрансем» ятлă материалта çырса кăтартнă.

Пахча валли ытлашши укçа тенкĕ пĕтермесĕрех производство каяшĕсенчен теплица тума пулать-и? Пулать иккен. Хаçат ку енĕпе мĕнле каяшсем лайăхрах пулнине те палăртать, теплицăна пуçса вырнаçтармалли схемăпа паллаштарать.

Ытти усăллă канашсем те пайтах номерте. Унти материалсене вуласан эсир улма-çырлапа пахчаçимĕçĕн çĕнĕ сорчĕсене ăçта туянма май пулнине пĕлĕр, сад ĕçне юратакансен паха опычĕпе паллашăр, хăвăра хумхантаракан ытти хăшпĕр ыйтусем çине хурав илĕр.

«Сад и огород» хаçат уйăхра икĕ хутчен тухса тăмалла. Унăн тиражĕ 10 пин экземпляр. Хаçата Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти, Канашри, Çĕмĕрлери тата Улатăрти Союзпечать киоскĕсенче туянма пулать.

И. ЯКОВЛЕВ.

Атăл кĕвви

Культура тата литературăпа
искусство страници

ПĔР ЯЛТАН— ВИÇĔ КОМПОЗИТОР

КУН ПЕККИ КУ ТАРАНЧЧЕН ПУЛМАНЧЧЕ. ВИÇЕ КОМПОЗИТОР — ПЕР ЯЛТАН. ТĂВАЙ РАЙОНЕНЧИ ТАРМАШРА ÇУРАЛНА АЛЕКСАНДР ВАСИЛЬЕВ, НИКОЛАЙ КАЗАКОВ, ЮРИЙ ГРИГОРЬЕВ — СССР КОМПОЗИТОРСЕН СОЮЗЕН ЧЛЕНЕСЕМ.

ВИÇÇЕШЕ ТЕ МАЛТАН ТАРМАШРИ ШКУЛТА, ШУПАШКАРТИ МУЗЫКА УЧИЛИЩИНЧЕ ВЕРЕННЕ. КАЙРАН АСЛА ПЕЛУ ИЛНЕ: ВАСИЛЬЕВ — МУСКАВРИ МУЗЫКАПА ПЕДАГОГИКА ИНСТИТУТЕНЧЕ КАЗАКОВПА ГРИГОРЬЕВ — ХУСАНТИ КОНСЕРВАТОРИРЕ.

Музыкăпа вĕсем пĕчĕк чухнех интересленнĕ. Виççĕшĕ те шкулти художество пултарулăхне хастар хутшăннă. Иккĕшĕн (Александрпа Николайăн) ашшĕсем учительсем —40—50-мĕш çулсенче чапа тухнă Тăрмăш хорне ертсе пынă Георгий Васильевич Васильевпа Нил Дмитриевич Казаков (хор 1954 çулта Мускавра Пысăк театрта тата Советсен çурчĕн Колоннăллă залĕнче юрланă, 1957 çулта Горькире смотрта диплом илнĕ). Юрий ашшĕ — Павел Григорьевич Григорьев колхоз ветеринарĕ, виçĕ хутчен Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин медальне илнĕ (пĕри ылтăн медаль). Паллах, ачасене музыкăна хăнăхтарнăшăн шкулта юрă урокĕсене ертсе пынă Александр Дмитриевич Дмитриев учитель те «айăплă».

Епле пулса тухнă тата пурнăçра: Александр Васильев ялти шкулта Н. Д. Казаковăн вĕренекенĕ пулнă, Шупашкарти училищĕре — унăн ывăлĕн, Николай Казаковăн, педагогĕ.

—Александр Васильев. Вунпилĕк çул каялла республикăри композиторсен çемйине хушăнсан, пирĕн хушăра вăл чи çамрăккиччĕ. Халĕ вара хамăра ертсе пырать: сакăр çул ĕнтĕ Композиторсен союзĕн правленийĕн председателĕ. Вăлах — РСФСР Композиторсен союзĕн правленийĕн секретарĕ. Творчествăра та пысăк çитĕнӳсем тума ĕлкĕрчĕ, ушăн ăна Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне тата Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине пачĕç.

Ялти хуткупăсçă паян чăвашсен паллă композиторĕ пулса тăчĕ. Музыка театрĕнче унăн «Чакка» оперине лартрĕç. Вăл çырнă произведенисем симфони оркестрĕн, Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕн, телевиденипе радио хорĕн тата музыкант-солистсен репертуарĕсенче янăраççĕ. Вĕсемпе республика тулашĕнче те паллашрĕç. Творчествăри çĕнĕлĕхе, пирĕн вăхăтри музыка чĕлхине туятпăр эпир вĕсенче.

пăрпа халăх инструменчĕсен оркестрĕ валли кĕвĕленĕ поэма, П. Хусанкай сăввисемпе кĕвĕленĕ юрăсем тата ытти те.

Виçĕ çул каялла, консерватори пĕтерсе, Н. Казаков Шупашкара таврăнчĕ. Халĕ вăл Композиторсен союзĕн председателĕн заместителĕ — хăйĕн учителĕн А. Г. Васильевăн «сылтăм алли». Çак кунсенче иккĕшĕ те РСФСРти композиторсен черетлĕ съездне делегат пулса хутшăнаççĕ.

Янăраççĕ чăвашра Н. Казаков кĕввисем те. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен академи театрĕнче «Айдар» драмăна унăн музыкипе лартрĕç. Халĕ Çамрăксен театрĕ хатĕрленĕ «Çурçĕр хыççăнхи апатлану» пьеса валли кĕвĕсем çырнă. Юлашки вăхăтри çитĕнĕвĕсем эстрада юррисемпе çыхăннă. Чылайăшĕ «Илем» ансамбль репертуарĕнче: «Пĕчĕк тăлăх хĕрачам», «Атăлтан тухать çур уйăх», «Кирек кам пулсассăн та» (иккĕшĕ П. Хусанкай сăввисемпе). Нумай пулмасть республикăра эстрада юррисен конкурсне ирттерчĕç, унта тăратнă виçĕ юрăшăн (Б. Чиндыков сăввисемпе) Николай 1-мĕш преми çĕнсе илчĕ.

—Юрий Григорьев. Çемьери тăваттăмĕш ача. Аслисенчен Валентина — çĕвĕç-мотористка, Владимир — трекер, СССР спорт мастерĕ (физкультура институтне пĕтернĕ), Геннадий — медицина фельдшерĕ.

Кĕçĕнни, Юра, мĕн ачаран музыка тыткăнĕнче: пуçламăш классенчех хорта юрлать, баянпа калать. Тăвайри музыка шкулĕнчи баянистсен курсне те çӳрет вăл. Ялти шкулта 8 класс пĕтериччен нота çырăвне те вĕренсе çитнĕ. Ахальтен мар ăна тӳрех Канашри педагогика училищин музыка уйрăмне илеççĕ. Унта баянпа Бетховенăн «Эгмонт» увертюрине те калама пултарнă, ку вăл, паллах, пысăк çитĕнӳ.

Кайран çар службинче — Германире тăракан совет çарĕсен Тĕп ансамблĕнче юрлать, баянпа калать. Композитор çулĕ çине тухиччен ик-виç çĕрте ĕçлеме тивнĕ: ялти культура çурчĕн директорĕ, Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕпе музыка театрĕн хорĕн артисчĕ (унта тăватă çул юрланă). Ĕçленĕ вăхăтрах музыка училищине композици ĕçне вĕренме В. А. Ходяшев класне çӳрет.

Пилĕк çул консерваторире, А. Б. Луппов класĕнче. В. Энтип сăввисем тăрăх çырнă «Вăрçă тĕлĕкĕсем» ярăмшăн çамрăк композиторсен Пĕтĕм Союзри конкурсĕнче диплом илет (юрă ярăмĕсем унăн тата пур—Ю. Ай-

Саманасен сассисем

КИТАЙ ПОЭЗИЙĔ

П. Э. XI—VI ĕмĕрсем

Юрăсен кĕнекинчен (II, V, 8)

Çулçăсем

Çутă-çутă çулçă çил çинче вĕçет.
Пуçласам, тус, юрă — юратас килет.
Çутă-çутă çулçă çаврăнса ӳкет.
Пуçласам, тус, юрă — аташас килет.

Лиана пуçтаратпăр

(I, VI, 8)
Чăтлăхра лиана пуçтаратпăр.
Пĕр-пĕрне пĕр кун кăна курман —
Виçĕ кас та тейĕн.

Армути çăлатпăр, пуçтаратпăр.
Пĕр-пĕрне пĕр кун кăна курман —
Виçĕ çу та тейĕн.
Хыт-хура хуçатпăр, пуçтаратпăр.
Пĕр-пĕрне пĕр кун кăна курман —
Виçĕ çул та тейĕн.

ЦЮЙ ЮАНЬРЕН

(п.э. 340—278 çç.)

«Лисао» поэмăран

Ир-ир эп çеçкерен сыпатăп сывлăм,
Кас-кас чечек çуначĕ çикелеп.
Чун-чĕремре пур чух чи çирĕп шанăç
Çак вăрăм выçлăх та ытла тем мар.

Хир çеçкисен пуçкăшăлĕ — ик татăк,
Сăрт çеçкинчен çыхатăп çĕннине.
Пĕр чĕреме нимрен те сывăххишĕн
Эп хатĕр тăхăр хут пуçа хума.

Мана та вилĕм хăратма хăйсассăн,
Эп ӳкĕнсе ӳкермĕп ĕмĕте, —
Пиртен çĕр пин хут ăслăраххисем те
Пуç хунă чăнлăха хӳтĕлесе.

ЦАО ЧЖИРЕН

Ахлату çинĕ ахлату

Шăпин çулне курап та, тупата,
Шеллетĕп тĕлсĕр утмăлтурата.

Пач татăлса çĕрти тымарĕнчен
Кусса çӳремелле ун хăçанччен!

Хыçне хăварнă тăхăр йăрана,
Çич çул хĕрри те чарайман ăна.

Çитет те çавраçил кĕтмен çĕртен
Ласкать хуралнă мĕскĕне темччен.

Варкăштарса кăра тăвăлĕпе,
Вĕçен-çӳрен тăвать унран тӳпе.

Вăр-вар вăйĕн йăлăхтарса çитсен,
Вăл пăрахать çунатсăра çӳлтен.

Эп те çаппа: çуралнă кăнтăрта —
Хĕвет сив çурçĕр юрĕ кил-çурт

Тус тухăçра — анăçалла тĕнккел
Тымарсăр утмăлтуратах, тен, эп

Пĕччен — ӳке-ӳке, тăра-тăра —
Таптатăп пилĕк сăрт чулне, акра

Тăван кил тĕтĕмне куç хупиччен
Курас пек сакăр кӳлĕ хыçĕнчен.

Пуласчĕ курăк хамăрăн хирте —
Ан тив, кĕл тутăр вут, лексен вирте.

Ĕç паман е ĕçрен кăларман вăл нихçан —
Çĕр касать пĕлĕт çийĕн чи ирĕк çĕрте.

Тепĕр чух уйăха пуççапать вăл çĕрле,
Хĕсметçе тухас марччĕ тесе ӳсĕрле.
Çеçкесем хушшинче аташса кайнăскер.
Сăрт вăл, эпĕр — тусан, кĕл, эшкер.

Çӳçе çӳçисем

Курсам, сивĕрех çупăрлаççĕ шыва
Çӳçе çӳçисем, сывлăмпа çуталсан.
Юр евĕр тасалăх шуратнă хăва
Хитрен тайăлать унталла, çил тухсан.

Салху чиперкке кантăкран туртăнса
Сăнать тĕмсĕлӳллĕн касхи çулсене.
Татать те çӳçенкĕ çӳçе çӳçине
Шыва вĕçтерет, вăрттăн шухăш тытса.

Хура курак краклатрĕ сĕм-çĕрле

Хура курак краклатрĕ сĕм-çĕрле —
Турат хӳтти чармасть пуль сив çиле.

Тăвать-ха тăлăх арăм хăй ĕçне —
Тĕртет вăл пурçăн, тĕтĕм тĕслине.

Хаш! хашлатса пăхать тĕттĕмелле:
Татах ирччен пĕччен тертленмелле.

ДУ ФУРАН

Кайкăрлă картина

Çил те сивĕн вĕрет шурă пурçăн çинчен —
Пит ӳнерлĕ ӳкернĕ çак кайкăр сăнне:
Выçă кусăн, тискеррĕн пăхать вăл çӳлтен,
Çунатне пар! сарса ыткăнма хатĕрскер.
Тупăш курăнтăр çех — çулăм вучĕ пекех
Виркĕнме хатĕр çав харсăр чун сунара,
Кайăк-кĕшĕк карти хушшинчен сирпĕтсе
Юн та тĕк çеçенхир çиннелле.

БО ЦЗЮЙИРЕН

Сивĕ çимĕç касĕ

Уйăх çутатмасть, çук вут çути—
Сивĕ çимĕç касĕ темшĕн сулхăн.
Çур çĕр те иртет — тĕм хӳттине,
Тĕксĕм чечексен хыçне, тăратăп.
Çĕнĕ кун çывхарнă чух çиççе
Хамăн çулсенчен хăра пуçлатăп.
Чăн та, шăп çур ĕмĕре çитме
Пĕр çул çех, хăрах çул çех-çке юлнă.

СУ ШИРЕН

Çак сене килсе çитрĕм кăна —
Çил вĕркешрĕ те çумăр тумларĕ.
Мĕскĕн кĕлĕм пек çулçӳревçĕ
Тупĕ-ши кил пекки тĕнчере!
Тӳпери кăпăшка пĕлĕтрен
Шурă çĕлĕк туса тăхăнасчĕ,
Юпăнчă вырăнне пĕркенесчĕ,
Çул вĕçне йăванса, тип çĕрпе.

ЛУ ЮРАН

Ăнсăртран çыртăм хутăм пĕве хĕрринче

К. В. Иванов çуралнăранпа
100 çул çитнĕ май

Вăрман лартар—и?

Нумаях пулмасть Чăваш телевиденийĕпе К. В. Иванов палăкне ăçта лартма палăртни, вăл мĕнле пуласси çинчен каларĕç. Поэт палăкĕ ун ячĕпе хисепленекен театр умĕнче вырăнлă та шеп пулмалла пек. Мĕнле те пулин кăлтăк сиксе тухса, малтан проектласа хунине ан пăстăрччĕ çеç — ун пек киревсĕрри пирĕн час-часах тупăнкалать. Ав, Çеçпĕл Мишши палăкне лартрĕç. Вырăнĕ те килĕшӳллĕ — халăх иртсе çӳренĕ вырăн, сăнĕ те — ытла ятламаллах мар, тейĕпĕр. Çапах та мĕн чухлĕ çитменлĕх кăмăла пăсать!

К. Иванов палăкне тунă чух çавăн евĕр пулса ан тухтăрччĕ, малтан палăртса хуни харама ан кайтăрччĕ. Пĕтĕм ĕçе васкамасăр, типтерлĕ туса пырсан, эпир ĕмĕтленнĕ пек пулма тивĕç.

Скульптура умне, ырă çынна хисеплесе, чечек çыххисем хурас йăла пур. Аван йăла, тиркеме çук. Анчах черчен чечек тепĕр темиçе сехетренех шанать, типет. Чечек-çеçке яланах ешĕл упрансан, мĕн тери аван, килĕшӳллĕ пулмалла! Тĕнчипе паллă поэтăмăр К. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитсе пынă май манăн çакăн пек шухăш-ĕмĕт пур. Чаплă юбилее палăртса палăк лартнипе çеç çырлахма кирлĕ мар.

Сакăн пек тĕслĕх илсе парам: 1987 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче наци геройĕ Васил Левски çуралнăранпа 150 çул çитнĕ май Болгари халăхĕ ун ячĕпе вăрман лартма пуçланă. Карлово хули çывăхĕнче вăрман валли 20 гектар çĕр уйăрнă. Пирĕн те çавăн пек тума май çук-ши? Ман шутпа, ку ĕçе халăх йышлăн хутшăнмалла: тăван поэзие, чăваш чĕлхине хисеплекен кашни çын, асран кайми поэта чысласа, йывăç, тĕм е чечек лартса ӳстерме пултарать. Нарспипе Сетнере асăнса, Иванова чысласа, çĕнĕрен-çĕнĕ йывăç лартсан, мĕнле чипер симĕс палăк — ешĕл вăрман е парк ӳссе ларнă пулĕччĕ!

Памятникĕ кирлĕ вăхăтра пулса çитет-и е çитмест — калама пĕлес çук. Шанас килет-ха та, анчах час-часах, ваттисем каланă пек, «шаннă йăвара...» теме тивет. Вăрман е парк лартасси вара хамăртан, кашни çын çĕкленĕвĕнчен килет. Симĕс палăка кашни çулах çĕнетсе сарса, илемлетсе пыма пулать.

Тен, ман ĕмĕтпе килĕшекенсем татах та пулĕç? Ку ĕçе пурнăçлама май тупăнсан, халех хатĕрленме пуçламалла мар-ши?

В. ПРОХОРОВА,
Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институчĕн аслă редакторĕ.

Музей уçасшăн

Пĕлтĕрхи февраль уйăхĕнче КПСС Пишпӳлек райкомĕ районăн истори музейне тăвас пирки актив пухнă. Ăна вăрçăпа ĕç ветеранĕсен район совечĕн председателĕн заместителĕ Александр Федорович Семенов ертсе пырать.

Актив ĕçĕн малтанхи тапхăрĕ — пулас краеведени музейĕ валли материалсем пухасси. Музей район культурипе экономикин аталанăвне кăтартса паракан, унăн революциччĕнхи, вăрçăччĕнхи, вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи тапхăрĕсене çутатакан çичĕ пайран тăмалла. Унта пирĕн паллă ентешсен, чăваш поэзийĕн классикĕсен, Слакпуçĕнче çуралса ӳснĕ Константин Васильевич Ивановпа Яков Гаврилович Ухсай пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе творчестви çинчен каласа паракан ятарлă стендсем тума

рăшса ĕçлерĕ кунта. Пухăннă укçана музей фондне куçарма йышăнчĕç. Партипе совет, комсомол, агропром комплексĕнче ĕçлекенсем çав кун Халăхсен туслăхĕ паркĕра музей çурчĕн никĕсне хыврĕç.

Малашне музей совечĕн ларăвĕсене уйăхсерен ирттерме, тунă ĕçсем çинчен отчетсем илтме йышăнчĕç. Çакă музее вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ К. В. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнĕ тĕле уçма май парĕ.

Юлашкинчен çакна каласа хăварас килет: Пишпӳлек районĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан, ĕçре чапа тухнă ятлă-сумлă çынсене, художниксемпе творчество ĕçченĕсене хăйсем ӳкернĕ картинăсемпе ĕçĕсене, асăнлăвĕсене, К. В. Ивановпа Я. Г. Ухсай тăванĕсемпе тусĕсене аслă поэтăмăрсен творчествипе та-

...Александр Васильев. Вунпилĕк çул каялла республикăри композиторсен çемйине хушăнсан, пирĕн хушăра вăл чи çамрăккиччĕ. Халĕ вара хамăра ертсе пырать: сакăр çул ĕнтĕ Композиторсен союзĕн правленийĕн председателĕ. Вăлах — РСФСР Композиторсен союзĕн правленийĕн секретарĕ. Творчествăра та пысăк çитĕнӳсем тума ĕлкĕрчĕ, уншăн ăна Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне тата Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине пачĕç.

Ялти хуткупăсçă паян чăвашсен паллă композиторĕ пулса тăчĕ. Музыка театрĕнче унăн «Чакка» оперине лартрĕç. Вăл çырнă произведенисем симфони оркестрĕн, Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕн, телевиденипе радио хорĕн тата музыкант-солистсен репертуарĕсенче янăраççĕ. Вĕсемпе республика тулашĕнче те паллашрĕç. Творчествăри çĕнĕлĕхе, пирĕн вăхăтри музыка чĕлхине туятпăр эпир вĕсенче.

...Николай Казаков. Тăрмăшри вăтам шкулта тата Тăвайри музыка шкулĕнче вĕреннĕ. Музыкант пуласси ачаранах палăрнă. Çемьери йăлапа Кольăн аппăшĕ Евгения Шупашкарти музыкăпа педагогика факультетне пĕтерет, халĕ тăван ялтах ĕçлет. Коля та малтан çав факультетах кайса кĕрет. Институтра вĕреннĕ вăхăтрах музыка училищинчи композици класне те çӳрет.

Тепĕр икĕ çултан — Хусанти консерваторире. А. Б. Луппов профессорăн композици класĕнче. Иккĕмĕш курсрах — çамрăк композиторсен Пĕтĕм Союзри конкурсĕн лауреачĕ. Ачасен хорĕпе юрламалли пилĕк пайлă «Хаваслă сăнсем» сюитăна тăратнăччĕ вăл çав конкурса. Эпир ăна радио передачисенче пĕррере кăна мар илтнĕ.

Консерваторире Коля чылай произведени çырать: симфони оркестрĕпе каламалли Увертюра тата «Çеçпĕл» поэма, виçĕ соната — фортепиано, сĕрме купăс тата флейта валли, икĕ квартет — вĕрсе каламалли тата хĕлĕхлĕ инструментсем валли, «Авалхи сас» — шă-

Кĕçĕнни, Юра, мĕн ачаран музыка тыткăнĕнче: пуçламăш классенчех хорта юрлать, баянпа калать. Тăвайри музыка шкулĕнчи баянистсен курсне те çӳрет вăл. Ялти шкулта 8 класс пĕтеричченех нота çырăвне те вĕренсе çитнĕ. Ахальтен мар ăна тӳрех Канашри педагогика училищин музыка уйрăмне илеççĕ. Унта баянпа Бетховенăн «Эгмонт» увертюрине те калама пултарнă, ку вăл, паллах, пысăк çитĕнӳ.

Кайран çар службинче — Германире тăракан совет çарĕсен Тĕп ансамблĕнче юрлать, баянпа калать. Композитор çулĕ çине тухиччен ик-виç çĕрте ĕçлеме тивнĕ: ялти культура çуртĕн директорĕ, Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕпе музыка театрĕн хорĕн артисчĕ (унта тăватă çул юрланă). Ĕçленĕ вăхăтрах музыка училищине композици ĕçне вĕренме В. А. Ходяшев класне çӳрет.

Пилĕк çул консерваторире, А. Б. Луппов класĕнче. В. Энтип сăввисем тăрăх çырнă «Вăрçă тĕлĕкĕсем» ярăмшăн çамрăк композиторсен Пĕтĕм Союзри конкурсĕнче диплом илет (юрă ярăмĕсем унăн тата пур — Ю. Айдаш, М. Сениэль сăввисемпе). Композици ăсталăхне тĕрлĕ жанрсенче туптать: трубапа валторна валли Сюита, валторнăпа каламалли Концерт, фортепиано валли Фантази, виçĕ пайлă Квартет (хĕлĕхлĕ инструментсемпе пĕрле), хĕлĕхлĕ инструментсен оркестрĕ валли тăватă пайлă Партита тата Концерт, юлашкинчен — пĕр актлă «Шуйттан чури» опера, К. В. Иванов сюжечĕпе (ку диплом ĕçĕ пулнă).

Консерваторирен вăл пĕлтĕр çеç тухрĕ-ха. Анчах унăн сасси те илтĕнет чăваш музыкинче. Радио тата телевидени передачисенче «Тăван кĕтес çинчен эп хыврăм юрă» ярăм янăрать (автор хăй, гитара каласа, юрлать), «Мунча юррине» Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Н. Дмитриев юрлать (вăл та Тăрмăшран), «Сакки чăн та сарлака» юрă Государство ансамблĕн солистки Л. Семенова репертуарĕнче, «Шăпчăксем», «Юратăвăм, кай» — «Çеçпĕл» ансамбль репертуарĕнче. Композиторăн В. Энтип, Р. Сарпи, М. Сениэль, В. Кервен, Ю. Айдаш, С. Асамат сăввисемпе çырнă юрăсем вăтăра яхăн. Çĕнĕ юрă — «Хура чечек» (сăвви В. Кервенĕн). Илемлĕ, чуна тивекен кĕвĕллĕ. Тăван юрра юратакансем ăна кăмăлласах йышăнĕç. Çак кунсенче çамрăк автор Государство ансамблĕ валли «Хĕвел ташши» ятлă юрăпа ташă сюитине вĕçлерĕ (сăвви В. Энтипăн).

Тăвай районĕнчен тухнă композиторсем тата пур: Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕсем С. М. Максимов (1892—1951) — Енĕш Нăрвашран, В. П. Воробьев (1887—1954) — Элпуçĕнчен, Т. П. Парамонов (1895—1988) — Лачкассинчен.

Тăрмăшра тăвата кас. Виççĕшĕнчен пĕрер композитор тухрĕ: Шалаиккасран Александр Васильев, Анаткасран Николай Казаков, Мишеркасран Юрий Григорьев. Шуркасран тата кам тухĕ-ши?

Чăваш чĕлхине «тăрмăш» сăмах пуянлăх, пурлăх мул тенине пĕлтерет. Тăван халăха виçĕ композитор панă ял чăваш музыка культуришĕн чăнах та пуян ял пулчĕ.

Ю. ИЛЮХИН,
РСФСР культурăн тава тивĕçлĕ работникĕ.

Ласкать хуралнă мĕскĕне темччен.

Варкăштарса кăра тăвăлĕпе,
Вĕçен-çӳрен тăвать унран тӳпе.

Вăр-вар вăйăн йăлăхтарса çитсен,
Вăл пăрахать çунатсăра çӳлтен.

Эп те çапла: çуралнă кăнтăрта,
Хĕвет сив çурçĕр юрĕ кил-çурта.

Тус тухăçра — анăçалла тĕнккĕп,
Тымарсăр утмăлтуратах, тен, эп.

Пĕччен — ӳке-ӳке, тăра-тăра —
Таптатăп пилĕк сăрт чулне, вирă.

Тăван кил тĕтĕмне куç хупиччен
Курас пек сакăр кӳлĕ хыçĕнчен.

Пуласчĕ курĕк хамăрăн хирте —
Ан тив, кĕл тутăр вут, лексен вирте.

Эй, тем те тӳсĕп, чĕрĕлĕп кĕлтек,
Çĕрти тымар çĕрменнине пĕлсен.

ЛИ БОРРАН

Сăрт тӳпинчи храмра

Сăрт тӳпинчи храмра пĕччен эп çĕр каçасшăн.
Чи çӳллĕ çăлтăра кăшт сĕртĕнсе иртеп.
Пăшĕлтатма хăрап: тирпейсĕр калаççассăн,
Тӳпенрисен ыйхи ан кансĕрлентĕр теп.

МЭН ХАО-ЖАНЕ

Вĕрентӳçĕ Мэне хисеплеттĕм чунтан,
Чапĕ ун ĕмĕр-ĕмĕр упранĕ пирте.

Çур çĕр те иртет — тĕм хӳттине,
Тĕксĕм чечексен хыçне, тăрататăп.
Çĕнĕ кун çывхарнă чух çиççе
Хамăн çулсенчен хăра пуçлатăп.
Чăн та, шăп çур ĕмĕре çитме
Пĕр çул çех, хăрах çул çех-çке юлнă.

СУ ШИРЕН

Çак ене килсе çитрĕм кăна —
Çил вĕркешрĕ те çумăр тумларĕ.
Мĕскĕн кĕлĕм пек çулçӳревçĕ
Тупĕ-ши кил пекки тĕнчере!
Тӳпери кăпăшка пĕлĕтрен
Шурă çĕлĕк туса тăхăнасчĕ,
Юпăнчă вырăнне пĕркенесчĕ,
Çул вĕçне йăванса, тип çĕрпе.

ЛУ ЮРАН

Ăнсăртран çыртăм хутăм пĕве хĕрринче

Лартăм сулхăнта ним шутламасăр,
яшма шăхличе чилеттерсе.
Иртрĕç çулăмсем вуншар-вуншарăн
кивĕ ĕмĕте тĕллентерсе.
Тарăн юхĕмра çĕрет ват йывăç —
кам аса илсе шеллет ăна!
Çил хуса кайсан, çулне чухлаймĕ
типнĕ армути, хура тунĕ.
Çын телей шырать вăл ĕмĕр-ĕмĕр —
пурнăçăн йăли-йĕрки çапла.
Елĕк илĕртни ялан йăпатмĕ —
мĕншĕн хурланса пуç усмалла!

Чăвашла **ЭНТИП ВАÇÇИ** сăвăланă.

районăн истори музейне тăвас пирки актив пухнă. Ăна вăрçăпа ĕç ветеранĕсен район совечĕн председателĕн заместителе Александр Федорович Семенов ертсе пырать.

Актив ĕçĕн малтанхи тапхăрĕ — пулас краеведени музейĕ валли материалсем пухасси. Музей район культурипе экономикин аталанăвне кăтартса паракан, унăн революцичченхи, вăрçăчченхи, вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи тапхăрĕсене çутатакан çиче пайран тăмалла. Унта пирĕн паллă ентешсен, чăваш поэзийĕн классикĕсен, Слакпуçĕнче çуралса ӳснĕ Константин Васильевич Ивановпа Яков Гаврилович Ухсай пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе творчестви çинчен каласа паракан ятарлă стендсем тума палăртнă.

Ку çурта тума районăн çак пилĕкçуллăхри планне кĕртмен, çавăнпа укçа-тенкĕ уйăрман. Çак лару-тăрурав тухмалли çул-йĕр пĕрре: музей лартассине районти пĕрремĕш халăх стройки тесе пĕлтермелле.

Ку тĕллеве хăвăртрах пурнăçа кĕртес тесе райсовет ĕçтăвкомĕ субботник ирттерчĕ. Чылай коллектив та-

на уйăхăн музей фондне кусарма йышăнчĕç. Партипе совет, комсомол, агропром комплексĕнче ĕçленĕсем çав кун Халăхсен туслăхĕ паркра музей çурчĕн никĕсне хыврĕç.

Малашне музей совечĕн ларăвĕсене уйăхсерен ирттерме, тунă ĕçсем çинчен отчетсем итлеме йышăнчĕç. Çака музее вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ К. В. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнĕ тĕле уçма май парĕ.

Юлашкинчен çакна каласа хăварас килет: Пишпӳлек районĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан, ĕçре чапа тухнă ятлă-сумлă çынсене, художниксемпе творчество ĕçченĕсене хăйсем ӳкернĕ картинăсемпе ĕçĕсене, асилĕвĕсене, К. В. Ивановпа Я. Г. Ухсай тăванĕсемпе тусĕсене аслă поэтăмăрсен творчествипе тата пурнăçĕпе çыхăннă материалсене, вĕсен кĕнекисемпе портречĕсене музей валли ярса пама ыйтатпăр. Вĕсене КПСС Пишпӳлек райкомĕ ячĕпе ямалла.

В. ДМИТРИЕВ,
районти «Çутă çул» хаçат редакторĕн заместителĕ, музей совечĕн членĕ.

Пушкăрт АССРĕ.

ВĂРНАР ХĔРĔ

Тĕрленчĕк

...1938 çулхи кĕркунне. Эпир, Калинино педучилищинчи вуникĕ студент, уроксем хыççăн Вăрнара кайрăмăр. Çав кун пире комсомола илчĕç, билет пачĕç. Савăнăçлă çамрăксемпе тулнă коридорта ĕсĕклекен хĕрачана асăрхарăм. Темиçе кун çитменшĕн комсомола илмен иккен ăна. Чиперскер. Янаххи çинчи мăшăр турпалли пушшех илемлетет ăна. Пырса калаçсан, кăштах лăпланчĕ, йĕме чаранчĕ. Пĕчĕкçĕ Вăрнарпа унăн тӳрĕ урамĕсем тата тутăр вĕçĕпе куçĕсене шăлакан хĕрача яланлăхах асăмра юлчĕç.

Тепĕр хут ăна Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан çеç тĕл пултăм... 1942 çулта шинель тăхăнтăм. Манăн салтак çулĕ пуçланчĕ.

Çурхи тĕттĕм каç. Сĕлкĕш, пылчăк. Шалкăм çумăр юхтарса çăвать. Эпир, çара илнĕ хĕрĕх çамрăк, йывăр кутамккасем çĕклесе, Çĕмĕрлерен Вăрнара çуранах тапаланса çитрĕмĕр. Вăрман хĕрринчи пĕр кивĕ сарайĕнче кăштах каннă хыççăн хамăр чаçе васкарăмăр. Пире пулеметчика вĕрентрĕç. Пирĕн кĕçĕн командирсем вырăс тата Украинăпа Белоруссин çамрăкĕсемччĕ. Туслă пурăнаттăмăр эпир, çĕршыври тĕрлĕ халăх ывăлĕсем.

Çар ĕçне вĕреннĕ май, Вăрнарпа Кольцовка, Зеленовкăпа Уравăш çырми-çатринче нумай упаленме лекрĕ. Яланах стройпа çар юррисем юрласа çӳреттĕмĕр.

Тепĕр чухне, кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче, хирте ĕçлекенсене утă çулса параттăмăр.

1942 çулхи май уйăхĕнче, Вăрнарти штаба чĕнсе мана партбилет пачĕç. Эпĕ, комиссар аллине хытă чăмăртанă май, хăвăртрах фронта яма ыйтрăм. Хĕвеллĕ, лăпкă кун. Тавралăх илемлĕ. Ман умра икĕ хĕр савăнăçлăн калаçса пыраççĕ. Вĕсен калаçăвĕнчен çакна ăнлантăм: парти членне илнĕ иккен вĕсене те.

Çак илемлĕ, çамрăк хурăн евĕр кĕлеткеллĕ хĕрупраçа алă парсах саламлас килчĕ. Вĕсен умне хăвăрт тухрăм та:

— Вăрнар хĕрĕ-чиперккисем, парти ретне кĕнĕ ятпа саламлама ирĕк парсамăр, — терĕм.

Хĕрсем тăпах чарăнса тăчĕç. Мана ăшшăн саламланă май сăпайлăн кулса илчĕç. Сасартăк курах кайрăм: пĕр хĕрачин янахĕ çинче эпĕ пĕлекен мăшăр турпалли.

«Çавах, çавах. Ара, хам пĕлнĕ-паллана хĕр-иç ку!» Урăх ним калама аптăрарăм, чĕлхем çĕтрĕ.

— Мĕншĕн пирĕн умра юпа пек хытса тăратăн, аслă сержант юлташ, — тĕртсе илчĕ Вăрнар хĕрĕ. — Украинăра нимĕçсем алхасаççĕ. Сталинград еннелле тапаланаççĕ. Эсир çаплах кунта хĕрупраçа куç хĕссе пурăнатăр. Намăс мар-и?

Вăл каялла вар тавранчĕ те çарĕç комиссариачĕ еннелле васкавлăн утрĕ. Юлташĕ те ун хыççăн вирхĕнчĕ.

«Ытла хĕрӳллĕскер эсĕ, чĕкеçĕм. Мана, вăрçа кĕç-вĕç кĕрес çынна, ытла та йывăр каларăн. Тен, тĕрĕс те пулĕ. Пирĕн васкас пулать». Чаçе çитсенех штаба рапорт хыççăн рапорт çыртăм. Часах кĕтнĕ кун çитрĕ, мана фронта кайма ирĕк пачĕç.

Вăрнара эпир, аллă-утмăл сержант, каçалапа çитрĕмĕр. Райĕçтăвком картишĕнче çĕнĕ кĕпе-тумтир пачĕç. Эпĕ симĕс гимнастерка çухавине шурă татăк çĕлеме лартăм. Сасартăк (хыпаланнипе пулас), манăн йĕп çурмаран пант! хуçăлса кайрĕ. Пилотка ăшне хыпаларăм, тупаймарăм. Ĕçтăвкомăн уçă чӳречинчен пăхрăм. Пĕр хĕрача машинкăпа шаклаттарса пичетлесе ларать. Эпĕ ăна хам нуша çинчен пĕлтертĕм. Вăл ĕçлеме пăрахрĕ те сунтăхĕнчен йĕппе çип кăларса мана пачĕ. Аш тамаша, мăшăр турпаллиллĕ хĕр-çке ку! Машинистка ман çине шăтарас пек пăхрĕ, темскер аса илчĕ пулас, анчах нимех те шарламарĕ.

Часах пирĕн йĕри-тавра хĕрупраç пухăнчĕ. Салтаксем çерем çинче вырнаçнă: хăшĕсем васкавлă çыру тĕрлеççĕ, теприсем çипуçне йĕркене кĕртеççĕ, виççĕмĕшĕсем канаççĕ. Хăйхи хĕр ман пата именчĕклĕн утса пычĕ, унăн хура куçĕсенче тунсăх сисĕнет.

— Эсир кунтан паянах тухса каятăр-и?

— Тата виçĕ сехетрен, терĕç.

— Мана пĕркунхишĕн каçарăр. Вăл сăмахсем фашистсене çилленипе тухса кайрĕç. Çул çине çакна илсемĕр, унта блокнотпа кăранташ тата çимелли кăштах пур. Кăмăл тусамăр.

Вăл мана çавăнтах типтерлĕ чĕркем тыттарчĕ.

— Тавах, пикеçĕм. Анчах эпир пĕр-пĕрне пĕлместпĕр темме те юрать.

— Вăрнар хĕрĕ, — терĕ вăл, çемçен ăшшăн кулса.

— Çĕмĕрле каччи, — кивçене юлмарăм эпĕ те. Хĕрĕн аллине тытса чăмăртарăм.

— Сирĕн ята пĕлме юрать-и, Вăрнар хĕрĕ?

— Ман ятăм-шывăм пакетра пур. Кирлĕ пулсан, вулăр. Тен, иксĕмĕр каллех вăрçăра тĕл пулăпăр. Эпĕ те унта кайма тахçанах заявлени панă ĕнтĕ.

Çак самантра лейтенант команда пачĕ — васкасах строя тăтăмăр. Вăрнар хĕрĕ каялла кайрĕ — именчĕ пулас.

Тухăçран пуйăс хашлатса çитрĕ. Эпир вагонсене кĕрсе вырнаçатпăр. Уçă кантăкран пăхатăп. Вокзал умĕнче, çӳлти картлашкасем çинче, хĕрарăмсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Вăрнар хĕрĕсем пире эшалон курăнми пуличченех алă сулса ăсатрĕç.

* * *

Мĕн чухлĕ шыв юхмарĕ-ши унтанпа. Пĕр çулхине Вăрнара çитрĕм. Çанталăк калама çук илемлĕ. Таврара çĕмĕрт шăрши. Çывăхри вăрман хĕрринчи ватă çĕмĕртсем шап-шурă чатăр пĕркеннĕ. Çĕмĕртсем, çĕмĕртсем! Эсир те пирĕн пекех ватăлнă иккен. Кукăрăлнă. Пĕкĕрĕлнĕ. Чим, эпĕ кăлăхах тунсăхлатăп иккен. Авă, кукăрăлнă çĕмĕртсем çывăхĕнче çамрăк хунавсем йышлă ӳсеççĕ. Патвар, илемлĕ, илĕртӳллĕ.

Хыçра сасă илтĕнчĕ. Çаврăнса пăхатăп. Ман умра пĕр арçын тăра парать. Вăл мана хушаматпа чĕнчĕ.

Эпĕ ун çине чылайччен тинкертĕм.

— Эсĕ мана палласа илеймерĕн пулас-ха. Ара эпĕ...

— Хветут, эсĕ-им? Курманни ытла та нумай!

Эпир пĕр-пĕрин ытамне кĕрсе ӳкрĕмĕр. Унтан туслă калаçу пуçланчĕ.

— Тăванусем патне килсе курас терĕн-и?

— Манăн кунта тăвансем вуçех çук, çавах çак тавралăх питех те хаклă пек туйăнать. Куккук сассипе йăпаннă май, шухăша путрăм, япăх кунĕсене аса илтĕм. Таçта çакăнта манăн малтанхи хĕрӳ юрату вăраннă. Халĕ эпĕ, вăт çупна, çав вырăнсене шыратăп, — сантлерĕм кула-кула.

Çыр хĕрĕнчи çерем çине лартăмăр. Çырмара шăнкăртатса шыв юхать. Тӳпере тари тăрлатса юрлать. Çывăхри путене те парăма юлмарĕ. Виçĕ çул пĕрле вĕреннĕ, вăрçăра хытă тата ĕçпе писĕхнĕ юлташăм çине куç илмесĕр пăхатăп. Калаçу вăрçă çулĕсем çине кĕрсе кайрĕ.

— Эпир, фронтовиксем, халĕ те вăрçăри пекех çапăçатпăр, — хушса хучĕ юлашкинчен Хветут.

— Мĕншĕн фронтри пекех?— тавçăрса илеймерĕм эпĕ.

— Эпĕ халăх заседателĕ тата колхозри юлташла суд председателĕ. Çавăнпа ĕçкĕпе ирттĕхнине хирĕç тата ĕçлемесĕрех лайăх пурăнма ĕмĕтленекенсемпе çивĕч кĕрешме тивет.

